Пĕр мăшăрпа ĕмĕр ĕмĕрлекен сăваплă тенине мала хурса пурăнакансем пĕтмен-ха çĕршывăмăрта • 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

27(897) №, 2015, июль/утă, 11

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


- Заводран тарнă тесе хĕре Çĕрпӳри тĕрмене 5 çуллăха хупса лартнă 2 стр.
- Тĕлĕнмелле те, хăяр сĕт юратать-мĕн 8 стр.
- Авăтатчĕ куккук чăтлăхра... 9 стр.
- Çыравçă çĕрулмипе какай кукăлĕ юратнă 10 стр.


## Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Сире Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп!

Çемье кирек хăш саманара та кăмăл-сипетпе общество хаклăхĕсен тĕп управçи, юратупа ăшă кăмăллăх тата хăтлăх çăлкуçĕ шутланнă, ку вăл халĕ те çаплах. Тăван çĕршыва юратасси тăван килтен пуçланать. Çирĕп çемье – вăйлă Чăваш Енпе Раççей тĕрекĕ.

«Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх тĕрекĕ, патшалăх тĕрекĕ... Çемьен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăçра тĕл пулакан тӳнтерлĕхсенчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе çирĕп тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар», – тесе вĕрентнĕ Аслă çутта кăлараканăмăр Иван Яковлевич Яковлев.

Çемье институтне çирĕплетес, унăн хаклăхĕсене чĕртсе тăратас, нумай ачаллă çемьесене пур енлĕ пулăшу парас ыйтусем республикăри патшалăх влаçĕн органĕсемпе вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Эпир тунă йышăнусем хăйсен тухăçлăхне ĕненмелле çирĕплетсе пачĕç. Юлашки çулсенче Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесен шучĕ 25 процент чухлĕ ӳсрĕ, нумай пурăнакансен йышĕ вара – 18 процент чухлĕ.

Хаклă туссем! Пирĕн пĕрле пурăнмалла тата пĕрле вăй хурса ĕçлемелле! Çемье ырлăхне çирĕплетме, унăн социаллă тăрăмне лайăхлатма пулăшакан ĕçсене те пĕрлех пурнăçламалла.

Сирĕн килĕрте яланах таратлăхпа юрату, тăнăçлăхпа çураçулăх хуçаланччăр, ача-пăчан хаваслă кулли янăраса тăтăр! Сире тата çывăх çыннăрсене ырлăхпа ăнăçу тата çирĕп сывлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан М.ИГНАТЬЕВ.**

### ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 11.07 | +23 | +19 |
| 12.07 | +16 | +15 |
| 13.07 | +19 | +17 |
| 14.07 | +18 | +15 |
| 15.07 | +18 | +16 |
| 16.07 | +19 | +16 |
| 17.07 | +18 | +16 |




6 стр.

# Çемье – халăх, патшалăх тĕрекĕ

**Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Васильевич мăшăрĕпе Лариса Юрьевнăпа Правительство çуртĕнче республикăри вунпĕр çемьене федераци тата республика шайĕнчи тĕрлĕ наградăпа чысларĕ. Ку пысăк хисепе нумай çул юратупа килĕшӳре пурăнакан, пысăк йыш ӳстерекен вунпĕр çемье тивĕçрĕ.**

Уявпа саламланă май Михаил Игнатьев çемье кашни çыншăн тата обществăшăн пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ.

– Çак патшалăх уявĕ чи çамрăккисенчен пĕри. Çав вăхăтрах унăн тымарĕсем историре инçе-инçе каяççĕ. Кашни çыншăн питĕ ансат япаласем – çемье, ача-пăча, кил, тăвансем – пысăк вырăн йышăнаççĕ. Шăпах вĕсем пирĕн пурнăçра чи кирлисем пулса тăраççĕ те. Çак кун мана республикăри чи лайăх çемьесене саламлама пушшех те кăмăллă, – терĕ вăл.

*Хисеплĕ вулакансем!*

**"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн**

**июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен**

**ЙӲНĔ ХАКПА!**

**"ХЫПАР" – 625,62 тенкĕ**

*/кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йӳнĕрех/*

**"Хыпар"-эрнекун – 325,92 тенкĕ**

*/19,62 тенкĕ йӳнĕрех/*

**"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМНЕ" 343,8 тенкĕпе çырăнтараççĕ**

*/16,86 тенкĕ йӳнĕрех/*



ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Хĕвел ăшшиллĕ хĕрарăм

Çак сăмахсем тĕрремĕнех Анат Чаткасри Галина Тихоновăна пырса тивеççĕ. Ырă кăмăл, ăшпиллĕх унра çăлкуç шывĕ пекех тапса тăрать.

Тĕлĕнетĕн те: пурнăçĕнче хурашурне çителĕклех активнĕ пулин те, чун-чĕрипе хытман Галина Николаевна, кăмăлĕпе çеç çирĕпленнĕ.

Ялти çыхăну уйрăмĕнче 1987 çултанпа тимлет вăл. Хаçат-журнал, пенси укçи валеçет. Корреспонденцисене çынсем патне вăхăтра çитерессишĕн ырми-канми тăрăшать. Тулли сумкăллă почтальон хĕлле çуран, çулла велосипедпа çула тухать. Сивве е шăрăха, çилтăмана е шалкăм çумăра пăхмасăр ял çыннисем патне васкать. Ваттипе ватăлла, яшшипе çамрăкла, шăпăрлансемпе ачалла пуплеме сăмахне те, вăхăтне те тупать.

Галина Николаевнăшăн хăйшĕн те Чаткасри кашни кил, кашни çын тăван пекех туйăнать. Ĕçĕ канăçсăр пулин те, ăна чунтан парăннă вăл. Çырăнтару кăтартăвĕсемпе те Анат Чаткасри çыхăну уйрăмĕ яланах малта. Паллах, Галина Тихоновăн тÿпи те пысăк кунта.

Яваплăха туйса ĕçлекен Галина Николаевна – Анат Чаткас ял тăрăхĕн депутачĕ. Юрра-ташша ăста хĕрарăм культура çурчĕ çумĕнчи фольклор ушкăнне çÿрет. Хăй çĕленĕ-тĕрленĕ çи-пуçпа тăтăшах сцена çине тухать, куракансене савăк кăмăл парнелет.

Ал ĕçĕпе таврари паллă маçтăр Галина Николаевна. Кермен пек ларакан çурта чечеке çаварнă вăл: турăш кĕтесĕ, чÿрече, алăк каррисем, вырăн тавраш тĕлĕнмелле илемлĕ. Хуняшшĕпе хунямăшĕн Александрпа Елена Тихоновсен никĕсне куç шăрçи пек чыслăн упрать, тасалăхпа йĕркелĕхре тытать. Тăванĕ-и, кÿршĕ-аршă-и – пуринпе те тараватвăл. Кирек кама та хĕвел куллипе кĕтсе илет, ăсатса ярать.

Галина Тихонова çемье ăшăлăхне, унăн илемне хаклама пĕлет. Ашшĕ-амăшĕнчен – ялхуçалăхĕнче тар тăкса ят-сум илнĕ Николай Михайловичпа Вера Семеновна Петровсенчен – çуралнă кĕтесе хаклама, ĕçченлĕхе вĕреннĕ. Тетĕшĕпе Михаилпа, аппăшĕпе Альбинăпа, шăллĕпе Юрипе туслăхра çитĕнсе чунчĕрипе пуянланнă.

Çемье ăшшине качча тухсан, амăшĕ пулса тăрсан тата лайăхрах туйса илнĕ Галина Николаевна. Юратнă мăшăрĕпе ытла сахал пурăнайнă вăл. Виçĕ ачапа тăлăха юлнă. Пĕчĕкскерсене ÿстерсе пурнăçăн анлă çулĕ çине тухма пулăшнă. Ашшĕ вырăнĕнче пулса пурнăçра çирĕп те мал ĕмĕтлĕ пулма вĕрентнĕ. Канăçсăр кунсем, ыйхăсăр каçсем хĕрарăмăн мĕн чухлĕ вăй-халне туртса илмен-ши? Пурнăç тумхахĕсем мĕн чухлĕ тĕрĕслев витĕр кăларманши тата? Йывăр пулнă – шăлне çыртнă, кăшкăрса йĕрес килнĕ – куççуль витĕр кулнă... Пуçа усман, йывăр шăпине парăнман чăтăмлă хĕрарăм...

Ачисемшĕн хĕпĕртет амăшĕ. Пурте ура çине тăнă вĕсем.

Канмалли кунсенче, уявсенче Тихоновсен çурчĕ ĕç шавĕпе, савăк кулăпа тулать. Ывăл-хĕрĕ, кинĕпе мăнукĕ Авелина амăшне, асламăшне çĕнĕ вăй-хăват хушаççĕ.

**Зинаида СВЕКЛОВА.**
Шăмăршă районĕ.

МАТТУРРИСЕМ

# Тапса тăрать-ха чун хавалĕ



Упире пурăнакан Елена Гаврилова /Николаева/ 1925 çулхи çу уйăхĕнче Яманак ялĕнче кун çути курнă. Лена çемьере асли пулнă. Йывăр пурнăç пирки тăхăр ачаран пиллĕкĕшĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Çитменнине иккĕмĕш ачине çуратнă хыççăн амăшĕн сывлăхĕ хавшама тытăннă. Лена çичĕ çула çитсен кĕçĕннисене хăех апат пĕçерсе çитерме тытăнать, килти мĕнпур ĕç ун çине тиенет. Виçĕ вăрçа хутшăннă ашшĕ вунтăватă çул килте пулман.

– Йывăрччĕ ун чухнехи пурнăç, – педучилищĕре вĕреннĕ çулсене аса илет Елена Николаевна. – Шартлама сивĕ хĕлсенче общежитие ăшăтма вутă çукчĕ. Пĕр вырăн çине виççĕн выртса çиелтен матраспа витĕнсе ăшăнаттăмăр. Çăкăр пулман, эрнере пĕрре яла кайса кăшман, çĕрулми пĕçерсе килнĕ, çавна çикелесе пурăннă. Çапах та вĕренсе тухрăм вĕт!

Педучилище хыççăн ăна Упи шкулĕнчи пуçламăш класс учительне ĕçлеме илеççĕ. Хăйĕн тивĕçне яланах ырă та тÿрĕ кăмăлпа туса пынă, ачасене тарăн пĕлÿ тата тĕрĕс воспитани парас тесе тăрăшнă. Чылай медальпе наградăланă Елена Николаевнăна. Тĕрлĕ мухтав хучĕн шучĕ те çук. Мăшăрĕпе пилĕк ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине тăратнă. Халĕ унăн 16 мăнук, мăнукĕн 14 ачи.

Çулсем иртсен те вăхăта парăнасшăн мар-ха Елена Николаевна. Упи ялĕнчи «Сурпан» фольклор ушкăнне çÿрерĕ вăл, хăй çырнă сăввисене шăрантаратчĕ, кашни кун тенĕ пекех библиотекăна кĕнеке-хаçат вулама утатчĕ. «Сурпан» фольклор ушкăнĕпе концертсене çÿренĕ çулсене ăшă кăмăлпа аса илет Елена Николаевна.

Ялти пурнăç нихăçан та çăмăл пулман: çурт-йĕр çавăрмалла, ача-пăча çитĕнтермелле, выльăх усрамалла. Анкарти таврашĕнче те ĕçĕ самай. Çапах та пуça усман Елена аппа, нихăçан та нимĕнле ĕçрен те хăраман. Паянхи кун ытларах килте кăштăртатать, чăхсем усрама та вăй çитерет. 90 çула çитнĕскерĕн сăвăсем çырма паянхи кун та чун хавалĕ пур. Хăйне телейлĕ туять вăл çак самантсенче, пурнăçа философ куçĕпе тишкерет, çирĕп кăмăлпа малалла пăхать.

**Глафира ИЛЬИНА.**
Красноармейски районĕ.

ШĂПА

# Айăпсăр... айăпланă

Мария Кудряшова 1924 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Малти Пукашра çуралнă. Кĕçĕн класра ялта вĕреннĕ хыççăн вăтам шкула Октябрьскине çÿреме пуçланă. 1939 çулта 7-мĕш класран вĕренсе тухнине çирĕплетекен свидетельствăна илнĕ. Шкул хыççăн тăван ялĕнчи Ленин ячĕллĕ колхозра ĕçленĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан 4 уйăхран Малти Пукаш ялĕнчен 10 çынна Чăнкасси ялĕ çывăхне окоп чавма янă. Çав çул шартлама тăнине халĕ те асрах тытаççĕ. 38-41 градус сивĕре ирхине 6 сехетрен пуçласа сĕм çĕрлеччен лумпа-пуртăпа шăннă çĕре кĕрĕслеттере-кĕрĕслеттере кайма тивнĕ. Ĕç вĕçленсен те хваттере çитме Тупай Ĕсмĕл ялне 4 çухрăм утнă. Кăнтăрла та вĕри апат пулман, темиçе татăк ыраш çăкăрĕпех çырлахнă.

– Прорабсемпе мастерсем пирĕнтен пĕр утăм та пăрăнман, питĕ тимлĕн тĕрĕслетчĕç, уйрăмах – ĕçе килнипе кайнине. Йĕрке çирĕп пулнă. Пирĕн ушкăнра Эльменкасси ачи Николай пурччĕ. Пĕррехинче вăл 5 минут кăна каярах килчĕ, апла пулин те ăна 5 çуллăха тĕрмене хупрĕç, – аса илет Мария Яковлевна. – Çавăнпа ĕçе юлса килме питĕ хăранă, ирĕк ыйтмасăр кăшт маларах кайма та шикленнĕ.

Мария Кудряшова ĕçленĕ ушкăнра хăйĕнпе пĕр ялти каччăсем – Иван Александровпа Павел Андреев – пулнă. Вĕсене 1942 çулта вăрçа илсе кайнă.

– Иван киле таврăнаймарĕ, Мускава хÿтĕленĕ май вăрçă хирĕнчех выртса юлчĕ. Павел 1944 çулта аманса таврăнчĕ, – аса илет ветеран.

1942 çултан пуçласа ялти çамрăксене вăрçă ĕçне вĕрентнĕ, винтовкăна салатса пуçтарма, тарăн варсенче пăшалран пеме хăнăхтарнă. Çав çулах раштавра Мария та çар комиссариатĕнчен повестка илет. Тепĕр кунах хĕр юлташĕсемпе пуçтарăнса килтисенчен уйăрăлса Канаша медкомисси тухма каять. Анчах унăн сывлăхĕ алла хĕç-пăшал тытса тăшманпа çапăçма юрăхлă мар иккен, каялла таврăнма тивнĕ.

Апла пулин те тепĕр уйăхранах тепĕр повестка килет. Хĕр Мускава çитет. Кудряшовăн уринчи шыçăсене пула ăна тухтăрсем каллех яла яраççĕ.

Çав çулах пуш уйăхĕнче хĕре Уралти алюмини заводне мобилизацилеççĕ, производство шлакне тасатнă çĕре тăратаççĕ. Станоксем – талăкĕпех, çынсем сменăпа ĕçленĕ. Çын çитмен чухне юлма та лекнĕ. Калама çук йывăр ĕçшĕн тÿлекен укçа çимелĕх те çитмен. Пурăнма та юхăннă общежитие вырнаçтарнă. Çавăнпах ĕçлекенсен йышĕ хăвăрт чакма пуçланă, пурте май пур таран хăвăртрах килĕсене таврăнма тăрăшнă. Виçĕ чăваш хĕрĕ те тăван тăрăха таврăнма тухнă. Çĕрле Мускав еннелле каякан пуйăс вакунĕсен айне майлашăнса выртнă та çапла çула тухнă. Кашни станцирех тĕрĕсленĕрен хĕрсен темиçе хутчен те пуйăс çинчен пуйăс çине куçма тивнĕ. Пилĕк талăкран тин Тĕрлемесе çитнĕ. Çĕрлехи вăхăта пăхмасăр 35 çухрăмри тăван ялне утнă. Çапла 1944 çулхи çуркунне Мария Кудряшова тăван алăк уратинчен каçнă.

Ку ĕç акара пулса иртнĕ, çу уйăхĕнче ăна татах повестка тыттараççĕ. Хальхинче Октябрьскинчен Канаша хĕрсемпе каччăсене кăна мар, килĕсене сиплеме янă аманнă салтаксене те чĕннĕ. Канашра вĕсене Киева ăсатасса пĕлтернĕ. Медкомиссире никама та пĕр утăм та пăрăнтарман, дежурнăйсем хуралласах тăнă. Анчах вĕсене Марийăпа юлташĕ Ангелина калаçтарса ÿкĕте кĕртнĕ: çул çинче çимеллисем илетпĕр тесе пасара тухнă та хăйсем чиркĕве васканă. Пĕр хушă кĕлĕре тăнă, çурта çутнă хыççăн каялла таврăннă.

Ăсатакансен черетне вуланă чухне Кудряшова хушамачĕ тухман. Мария каллех тăван ялне таврăннă. Пĕр-икĕ кунранах Октябрьскинчи хăмла пунктне счетовода ĕçлеме вырнаçнă. 1944 çулхи авăн вĕçĕнче, хăмла пухмалли вăхăтра, кунта милици килнĕ. Хĕре заводран тарнă тесе Çĕрпÿри тĕрмене илсе кайнă – 5 çуллăха хупса лартнă. Каярахпа ăна Шупашкара чукун çул вокзалĕ çывăхĕнчи тĕрмене куçарнă. Айăплинисене çуранах хальхи Константин Иванов ячĕллĕ театр çуртне тума илсе çÿренĕ. Унта кирпĕч, растворпа бетон сĕтĕрттернĕ. Вăл вăхăтра пур ĕçе те алă вĕççĕн пурнăçланă. Кунта Мария хăйĕнпе пĕр ялти Мария Лукинапа тертленнĕ, тĕрме çăкăрне пĕрле çинĕ.

1945 çулхи çулла Лукина вилмеллех чирленĕ, куçне тĕрме больницинчех хупнă. Мария Яковлевнăна 1945 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче тухнă амнистипе авăнăн 22-мĕшĕнче ирĕке кăларнă. Çакăншăн савăннă хĕр килне икĕ кун çуран утнă.

Мария пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ирĕклĕ пурнăça хăнăхнă, колхоз ĕçне хутшăннă. Вăл вăхăтра счетовода Анатолий Кольцов тăрăшнă. 1949 çулхи çурлан 5-мĕшĕнче çамрăксем çемье çавăрнă. Мария Яковлевнăпа Анатолий Миронович ултă ача çуратса ÿстернĕ. Кольцовсен кĕçĕн ывăлĕ Юрий амăшĕпе тăван килĕнче пурăнать.

Мария Яковлевна 10 çул ытла фермăра ĕçленĕ. Малтанах чăх-чĕп пăхнă. Кашни чăхран çулталăкне 146 çăмарта илсе республикăра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Кайран лайăх ĕçчене пăрусем пăхма куçарнă. Çавăнтанах вăл 1975 çулта тивĕçлĕ канăва кайнă.

Пĕлтĕр 90 çул тултарчĕ пулсан та кил-тĕрĕшри ĕçĕсене те хутшăнать Мария Яковлевна, пĕрре те ахаль лармасть. Хастар хĕрарăм «Ача амăшĕ героиня» ордена, «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

**Альберт АНИШ.**



ПУЛĂШУ

# Проектсем пурнăçа кĕреççĕ

**ЧР ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов Раççейĕн тĕп аграри ведомстви видеоконференци майĕпе йĕркеленĕ канашлура ялсене аталантарма пулăшакан федерацин тĕллевлĕ программине пурнăçа кĕртме кăçал республикăра 426,51 млн тенкĕ уйăрнине палăртнă. 179 çемье, çав шутра 121 çамрăк çемьепе специалист, ялта çурт лартма е туянма патшалăхран укçа пулăшăвĕ илĕç.**

Конференцире шăпах 2014-2017 çулсенчи тата 2020 çулччenхи тапхăрта ял территорийĕсене çирĕп аталантарасси çинчен калакан тĕллевлĕ программа мĕнле пурнăçланни çинчен сăмах хускатнă.

Ялсенче фельдшерпа акушер пункчĕсем тата пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем тăвассипе Чăваш Ен Раççейри чи лайăх сакăр регион шутне кĕнĕ. Кăçал республикăра тата 36 фельдшер пункчĕ уçăлмалла. Министр асăннă тăрăх, строительство тĕлĕшпе аукционсем ирттернĕ. Пурăнмалли вырăнсенче социаллă инфратытăмпа çыхăннă услови туса парассипе те проектсем палăртнă. Вĕсем пурнăçа кĕреççĕ. Кăçал Шупашкар районĕнчи Çĕньял ял тăрăхĕнче автоçул тума тĕллев лартнă. Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам салинче вара маларах пуçланă çул строительствине тата ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе çыхăннă ĕçе вĕçлемелле.

Сергей Владимирович тин çеç ĕçе пуçăнакан фермерсене пулăшассипе тата çемье фермисене аталантарассипе çыхăннă программăсем республикăра мĕнле пурнăçланнипе те паллаштарнă.

**Елена БАШКИРОВА.**

ÇЫРАВ

# Ялсене аталантарма

**Çак кунсенче Правительство çуртĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пынипе Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравне йĕркелесе ирттерессипе Правительство комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулчĕ. Унăн ĕçне ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов, Правительство комиссийĕн членĕсем, район-хула ертÿçисем, ял тăрăхĕн специалисчĕсем хутшăнчĕç.**

Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравне çĕршывра 2006 çулта ирттернĕччĕ. Унтанпа кĕçех вунă çул çитет. Çырава çĕршывра тепĕр çул çĕнĕрен йĕркелесе ирттересшĕн. Юлашки çулсенче лару-тăру палăрмаллах улшăнчĕ. Агропромышленноç комплексĕнчи ĕç-хĕле тĕплĕн пĕлмесĕр отрасле кирлĕ пек пулăшма йывăр. Çырав Чăваш Енре 2016 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çурлан 15-мĕшĕччен иртĕ.

Çырав çĕр пурлăхне, унпа мĕнле усă курнине, ялхуçалăх культурисен лаптăкне, выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп шутне, ялхуçалăх продукцине туса илсе сутнине тата ыттине туллин пĕлме май парать.

Мероприяти программине 2006 çулхи Пĕтĕм Раççейри тата 2012 çулхи сăнавлăх иртнĕ çыравсене шута илсе хатĕрленĕ. Унсăр пуçне переписре юлашки вунă çулта ялхуçалăх технологийĕ мĕнле улшăнса пынине те шута илĕç.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре çырава хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ. Нормативпа право никĕсне, çыравра шута илмелли обьектсене палăртаççĕ, список тăваççĕ. Кăçал хатĕрленÿ тапхăрĕн малтанхи ĕçне вĕçлемелле.

**Елена МИШИНА.**

ИНКЕК

# Шывăн туратти çук

**Çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче çанталăк калама çук шăрăх тăчĕ. Çак кун шывра утă çын пурнăçĕ татăлчĕ.**

Муркаш районĕнчи Патаккассинчи 42 çулти арçын кăнтăрла, ентешĕсемпе эрех ĕçнĕ хыççăн шыва кĕме шухăшланă. Анчах хĕрĕнкĕ арçын ишсе тухайман.

Канаш районĕнче пурăнакан 45 çулти арçын виллине çак кун пĕверен туртса кăларнă. Шыва кĕме ятарлă вырăн çуккине пăхса тăман вăл, хĕртсе пăхакан хĕвелрен çăлăнма хăтланнă. Шел те, çăмăлттайлăх инкекпе вĕçленнĕ.

Шупашкарти "Байконур" микрорайонта юлташĕсен куçĕ умĕнчех 30 çулти арçын шыва анса кайнă. Ÿсĕр арçын пĕвене сикнĕ те тухайман. Унăн ÿтне çăлавçăсем тупнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Анат Çĕрпÿккассинче инкек пулнă. 44 çулти арçын пурнăçĕ шывра татăлнă.

Çĕнĕ Шупашкарти 30 çулти арçын Атăл урлă ишсе каçас тенĕ, анчах та 10 метр ишсенех путнă. Пулăшу вăхăтра çитейменнипе унăн пурнăçĕ синкерлĕ татăлнă.

Тепĕр кунне, утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче те, Вăрнар, Муркаш районĕсенче икĕ арçын пĕверен тухайман.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 23 çын путса вилнĕ. Çăмăлттайлăха, тимсĕрлĕхе, эрех ĕçнине пула шывра усăлма хăтланнипе кашни çулах вун-вун çын пурнăçĕ татăлать. Пĕлмен вырăнта тата ÿсĕрле шыва кĕни нихăçан та ырри патне илсе çитермест.

**Елена МИХАЙЛОВА.**

СЫВЛĂХ

# Малалла утмалла

**Утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче пирĕн республикăра ĕçлĕ тĕлпулупа Раççей Федерацийĕн сывлăх сыхлав министерствин тĕп онкологĕ, Н.Н.Блохин ячĕллĕ РОНЦ директорĕ, РАН тата РАМН академикĕ, медицина ăслăлăхĕн докторĕ Михаил Давыдов пулнă. Михаил Иванович малтанах ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьевпа тата ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕпе Алла Самойловăпа тĕл пулнă.**

Çав кунах Михаил Игнатьевпа Михаил Давыдов Республикăри онкологи клиника больницин диагностика корпусне çитсе курнă. Унти компьютер тата магнитпа резонанс тамографийĕн кабинечĕн, радионуклид диагностикин, эндоскопин шалти диагностикин уйрăмĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă, усал шыçăпа чирлĕ хĕрарăмсене психологи пулăшăвĕ сĕнекен центрăн релаксаци тата психологи тренингĕсен пÿлĕмне, сиплев физкультурин залне хакланă.

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ онкологи диспансерĕнче ĕçлекенсемшĕн тепĕр пулăмпа та асра юлать – диагностика корпусĕнче малашне телемедицина центрĕ ĕçлĕ. Михаил Васильевичпа Михаил Иванович хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрĕ Лидия Воропаева унăн мелĕсемпе майĕсем çинчен каласа кăтартнă.

Михаил Давыдов профессор пирĕн патра хăнара пĕрремĕш хутчен. Шупашкар килĕшнине пĕлтернĕ вăл.

– Медицина учрежденийĕсенче пултăм. Чăваш Енĕн сывлăх хуралĕнче умри тĕллевсене татса пама пултаракан явапллă тытăм чăмăртаннине туйрăм, – тенĕ хăна. Диспансер хирургĕсемпе ĕçлесе курнăскер вĕсен квалификацийĕне кăмăллине те пытарман. – Пациентсене пулăшас енĕпе Чăваш Республики Европа стандарчĕсене çитессе шанма пулать, – тенĕ вăл.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Салтак тÿми – юратупа телей палли

**Татьяна НАУМОВА**

**2008 çултанпа пирĕн çĕршывра утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне уявлаççĕ. Шăпах Çемье çулталăкне ирттернĕ чухне паллă тума тытăнчĕç ăна.**

**Ку сĕнÿпе Патшалăх Думин депутачĕсем тухнăччĕ. Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне хăть те хăш конфесси те уявлама пултарать тенĕччĕ вĕсем. Чăн та, пĕр-пĕрне савса, килĕштерсе пурăнассине хăть те мĕнле тĕн çынни те сумлать.**

**Православи тĕнне ĕненекенсем çак кун килти телейшĕн, килĕшÿшĕн, лăпкăлăхшăн яланах çурта çутнă. Ара, Петрпа Февронин çветтуй мăшăрăн кунĕ пек паллă-çке вăл чиркÿ календарĕнче.**

**Çĕнĕ, çав вăхăтрах историре тахçанах çырăнакан уявăн хăйĕн наградисем те пур ĕнтĕ. Çак кун нумай çул килĕштерсе пурăнакан мăшăрсене «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа е медальпе чыслаççĕ. Çавăн пекех нумай ачаллисене хисепленине палăртма «Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ» орденпа орден медалĕ те пур.**

**Халĕччен республикăри 7 çемье «Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ» ордена тивĕçнĕ, вуннăрĕшĕ – орден медале. «Юратупа шанчăклăхшăн» орден 2010-2014 çулсенче 89 мăшăра тивĕçнĕ. Кăçал вĕсен йышне тата 11 пуянлатать.**

**«Юратупа шанчăклăхшăн» медале вара ку таранччен Чăваш Енре 363 çемье илнĕ. Кăçал вĕсен йышне 25 тата ытларах çул пĕрле пурăнакан тата 70 çемье хутшăнать.**

**Çапла, пĕр мăшăрпа ĕмĕр ĕмĕрлекен сăваплă тенине мала хуракансем пĕтмен-ха çĕршывăмăрта. Тавах, пур-ха тĕслĕх кăтартакансем. Тен, ытларах асаннесемпе кукамайсем, пирĕн аннесем пулĕ вĕсем? Вĕсенчен çемье ăшшине упрама вĕренесчĕ те паянхи çамрăксен… Аслă çултисенчен камран ан ыйт – çемье телейĕ килĕшÿре иккенне палăртаççĕ. Чăн та, арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрне хисепленине, сума сунине, хакланине çитекенни çуктăр. Чăн юрату çакă пулĕ – пĕр-пĕрне ватăличчен упрани.**

**Шел, эпир, паянхи çамрăксем, çакна ăнлансах çитерейместпĕр. Çавăнпах-тăр пĕрлешекенсенчен çурри каялла хутер уйăрттарать. Акă, 2014 çулта кăна-ха 9271 çемье чăмăртаннă. Пĕрпĕринпе текех пурăнмайннине вара 4843 мăшăр пĕлтернĕ. Тĕрĕссипе, çурринчен те ытларах.**

**Юрать, усаллие юнашарах ырри те çÿрет. Тĕслĕх шайĕнчисем те сахал мар. Пурте вĕсемпе танлашма пултараймастпăр пулин те вĕсене хисеплетпĕрех. Арăмĕпе упăшки килĕштерсе пурăннисĕр пуçне кил-çуртне ача сассипе те тултараççĕ-çке. Пĕрре-иккĕрен ытла çуратма хăйманнисемпе пĕрлех Турă мĕн пилленине кун çути кăтартакансем те пур. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăна Чăваш Енре нумай ачаллă 10559 çемьене шута илнĕ.**

**Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕн хăйĕн символ-чечекĕ – салтак тÿми – те пур. Ку та ахальтен мар-тăр. Хирте ÿсекен çак шурă чечек ĕмĕртен-ĕмĕре юрату палли шутланнă. Унсăр пуçне ăна çемье палли теме те пулать-çке. Сарри – кил-çурт, аттеанне. Шурă çулçисем – унта пурăнакансем. Шел, паянхи чечексем унчченхисемпе танлаштарсан чылай чухăнрах пулаççĕ капла. Ара, асаннесемпе кукамайсен килĕнче ача-пăча сак тулли ларнă-çке.**

**Çав хушăрах пирĕн ретре çав тери пархатарлă çемьесем те пур. Хăйсен ачисене çуратса пурнăç çулĕ çине тăратнисĕр пуçне юттисенне хăйсен хÿттине илсе ăшăлăхпа çепĕçлĕх парнелеме пултараяççĕ вĕсем.**

**Республикăра тăлăх ачасен йышĕ сахаллантăр, кашни пепке çемьере ÿстĕр тесе чылай ĕçлеççĕ. Ара, тăван ашшĕ-амăшĕ çумĕнче пурăнма май çук тăк хÿтлĕхсĕр юлнă пепкене пархатарлă пĕр-пĕр çемьене вырнаçтарма тăрăшаççĕ. Чăваш Ен ку тĕлĕшпе курăмлă çитĕнÿсем тăвать темелле-тĕр. Юлашки виçĕ çулта кăна 3 ача çуррĕ хупăнчĕ, пилĕк çулта ача усрава илекенсен йышĕ 11,7 процент нумайланчĕ. Шута илнĕ тăлăхсен, социаллă тăлăхсен 92,3 проценчĕ паян çемьесенче пурăнса воспитани илет. Усрава илнĕ ачасене каялла тавăрса ан паччăр тесе те нумай тимлеççĕ çÿлтисем. Ашшĕ-амăшĕпе психологсем çирĕп ĕçлеççĕ, усрав çемьесен хушшинче тĕрлĕ конкурс ирттереççĕ.**

**Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕн сумĕ çулсерен ÿснине те палăртмалла. Çамрăксем те пĕр-пĕрне ĕмĕр çирĕп савма тĕллев лартаççех. Çавăнпах-тăр çак кун пĕрлешесси те йăлана кĕрет. Уявра çемье çавăракансем пĕрле телейлĕ пурăнасса шанаççĕ. Чăннипех те çапла пулинччĕ! Утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче çеç мар, çулталăкри кашни кун çырăнакансем килĕшÿпе юратура пурăнса сак тулли ача çуратинччĕ!**



УЯВ

# Мускавра кĕрлерĕ Акатуй

**Йăли çапла чăвашăн: çурхи ĕçсене вĕçлесен ака уявĕнче савăнмалла. Районсенче Акатуйсем тахçанах кĕрлесе иртрĕç, республика шайĕнче те юрласа-ташласа паллă турăмăр ăна. Иртнĕ шăматкун вара, июль уйăхĕн 4-мĕшĕнче, чăвашсен тĕп уявĕ Мускавра кĕрлерĕ. Унччени çулсенче вăл Пĕтĕм Раççейĕн курав центрĕнче /вырăсла ăна кĕскен ВВЦ тетчĕç, халь ВДНХ/, Измайлово паркĕнче пулатчĕ. Халăх пĕлекен çав вырăнсене çĕршывăн тĕп хулинче пурăнакан йăхташăмăрсем уйрăмах йышлăн пухăнатчĕç. Кăçалхи Акатуй чăвашсене Мускаври национальноçсен çурчĕн пысăках мар картишĕнче кĕтрĕ. Ку пулăмра та йĕркелӳçĕсем ыррине çеç курчĕç: пĕтĕм чăваш Акатуйĕ Мускав хулин тĕп пайĕнче – Кремльтен пĕр çухрăмра – иртет, апла пулсан чăваш юрри-кĕвви Хĕрлĕ лапама та илтĕнет.**



Чăваш Республики пулса кайнăранпа – 95, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалланă Акатуя халăх пуçтарăннă май уява курса хаклама ТВЦ, Россия-24 телеканалсен, "Вечерняя Москва", "АиФ-Москва" хаçатсен журналисчĕсем килсе çитрĕç. Тепĕр тесен, кунашкал массăллă информаци хатĕрĕсем чăвашсен тĕп праçникĕ пирки кураканпа вулакана пĕлтернинчен тĕлĕнме кирлĕ мар пулĕ. Официаллă статистикăна тишкерсен – чăвашсем Раççейре халăх йышĕпе пиллĕкмĕш вырăнта. Пирĕн кăкран тухнисем Чăваш Енре кăна мар, республика тулашĕнче, ют çĕршывсенче самаях нумайăн пурăнаççĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине кăна пирĕн республикăран 208 пин çын тухса кайнă, вĕсенчен 106 пинĕшĕ çапăçу хирĕнче выртса юлнă, çуралса ӳснĕ патшалăхăн çутă пуласлăхĕшĕн хăйсене шеллемен 66 çын Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ, 11 ентешĕмĕр Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă. Чăваш Енĕн виçĕ космонавчĕ, Иван Яковлев вĕрентекенĕмĕр, Никита Бичурин ăсчахăмăр, Константин Иванов тата ыттисем чăваш ятне тĕнче шайне çĕкленĕ. Мăнаçланмалли чылай пирĕн – пурне çырса кăтартаймăн. Улăп çĕршывĕ çинчен мухтавлине, пархатарлине уява ертсе пыракансем те нумай каларĕç. Çĕр чăмăрĕ çинче кăткăсем, вĕлле хурчĕсем тата чăвашсем пек ĕçченни урăх нимĕн те, никам та çуккине те асăнса хăварчĕç.




Ака-суха уявне уçнă май Мускаври, Чăваш Енри пултарулăх ушкăнĕсем тăван республикăмăр гимнне хавхаланса юрларĕç. Эх, шăранчĕ те шăранчĕ вара чăвашсен юрри-кĕвви тĕп хуламăр урамĕсенче. Кам кăна юрласа-ташласа кăмăла çĕклемерĕ-ши? Раççей тĕп хулинчи чăвашсен "Атăл" хорĕ, унта ĕçлесе пурăнакан Ирина Пономарева, Елена Савельева юрăççем, Шупашкартан ятарласа килнĕ Валентина Кузнецова, Алина Федоровăпа Денис Пугач артистсем, купăсçăсем тăван халăх сăмахĕшĕн, юрри-ташшишĕн тунсăхланă йăхташăмăрсене савăнтарчĕç кăна мар, пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕç те. "Чăваш Ен ахах-мерчене" фестиваль çинчен пĕлмен çын юлмарĕ те пулĕ. Чăваш халăхне килĕштерекен Сергей Бреус усламçă тăрăшнипе çак фестивале хутшăнса палăрнисем Китай, АПШ тата ытти патшалăха кайса кураççĕ, унта пурăнакансене хăйсен уçă сассипе, юррисемпе хăпартлантараççĕ. Ксения Гришина, Анна Андреева, Никита Родионов, Мария Нефедова, Анна Окликова, Елена Диянова юрăсене чуна пырса тивмелле шăрантарчĕç. Москонцерт солисткине Ирина Шоркинăна, Олег Залогин поэт-композитора, Чăваш халăх артистне Валерий Иванова тата ытти артиста итлеме питĕ кăмăллă пулчĕ. Мускавран кăна мар, çĕршывăмăрăн тĕрлĕ регионĕнчен килсе çитнĕ чăвашсене саламлама Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков сăмах илчĕ.



– Кунта паян Чăваш Енрен, Пушкăртстанран, Тутарстанран, Ульяновск, Самар облаçĕсенчен йăхташăмăрсем килсе çитрĕç. Акатуй Куракин кнеçсен тĕп çуртĕнче иртни хăех асра юлмалли пулăм. Чăвашсем ку хушамат мĕне ăнлантарнине лайăх пĕлеççĕ. Çак уяв пĕтĕм халăха пĕрлештерет. Пирĕнпе пĕрле савăнма кунта Португали, Франци тата ытти патшалăх çыннисем килчĕç, вĕсем чăваш халăх культурипе, чĕлхипе, йăлийĕркипе кăсăкланаççĕ, – хавхаланса калаçрĕ вăл.

Унтан полпред Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьевăн салам сăмахĕсене вуларĕ. Çавăн пекех пухăннă халăх умне Мускаври чăвашсен наци культура автономийĕн ертӳçи Анатолий Григорьев, Раççейри чăвашсен наци культура автономийĕн вице-президенчĕ Валерий Шакин, Мускаври национальноçсен çурчĕн директорĕ Владимир Тарасов тухрĕç, кашниех чăвашсем пирки ыррине нумай каларĕ.

Хамăрпа пĕрле илсе кайнă "Хыпар", "Çамрăксен хаçачĕ" хаçатсене валеçнĕ май Акатуя пухăннисемпе те калаçма май килчĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарапай ялĕнче çуралса ӳснĕ Ольга Ванеева Мускава куçса кайнăранпах унти автономипе тачă çыхăну тытать.

– Эпир тăван республикăран аякра пурăнсан та тăван чĕлхепех калаçатпăр, пĕтĕм ĕçсене атте-анне чĕлхипе калаçсах пурнăçа кĕртетпĕр. Чăваш Енпе çыхăнăва татмастпăр. Акă Республика кунне те йышлăн пырса кайрăмăр, – палăртрĕ Мускавра тăхăр çул каялла тĕпленнĕскер.

Тăвай районĕнчи Çĕнçырмара çуралса пĕве кĕнĕ Светлана Егорова Мускавра 12 çул ĕçлесе Канашра хваттер те илнĕ. Ялан ĕçленĕрен чăваш юрри-кĕввишĕн питĕ тунсăхлать вăл, çавăнпах Мускаври Акатуя çулленех килет.

Мускав патшалăх строительство университетĕнче чăвашсем самай йышлăн вĕренеççĕ. Унта ăс пухма Тăвай районĕнчен кайнă Александр Михайловпа Надежда Гаврилова Мускав облаçĕнчи Пушкино хулинче пурăнакан вырăс каччине Егор Мельчохина чăваш чĕлхипе интереслентерме пултарнă. Халĕ вăл Мускаври представительство çумĕнчи чăваш шкулне те çӳрет.

Петĕр Хусанкайăн пĕтĕм тĕнче пĕлекен сăввин "Эпир пулнă, пур, пулатпăр" йĕрки темиçе хут та янăрарĕ Мускаври Акатуйра. Çук, ЮНЕСКО асăрхаттарăвĕпех пĕтекен халăх мар-ха эпир – пирĕн пуласлăх çутă. Кăткăпа, вĕлле хурчĕпе танлаштараççĕ пулсан эпир пурăнатпăр, аталанатпăр, тĕнчене хамăр чăваш пулнипе интереслентеретпĕр.

**Дмитрий МОИСЕЕВ.**

Николай ЗВЕРЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.




ПУЛТАРУЛĂХ

# Тапать-ха чăвашра хастарлăх

Коми Республикинче иртнĕ фестиваль тĕрлĕ регионти чи пултаруллă 22 коллектива пухнă. Мордови, Карели, Удмурт, Пушкăрт тата ытти регион представителĕсен хушшинче Чăваш Ен чысне «Кăмăл» чăннипех те чыслăн хӳтĕленĕ.

– Çак çĕнтерӳ пирĕн ушкăнăн çеç мар, пĕтĕм республикăшăн пĕлтерĕшлĕ тесе шухăшлатпăр, – терĕ ансамбль ертӳçи Дина Кудряшова.

2011 çулта çеç йĕркеленнĕха вăл. Пусласа Çĕнĕ Шупашкарта купăс каласа такмак юрлакансен ăмăртăвне хутшăннă «Кăмăл». 37 ушкăнран тӳрех пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çакă пурне те хавхалантарнă, ансамбле йĕркелесе малашне те тытса пырас ĕмĕт пушшех вăйланнă. Халăх пултарулăх çурчĕ урлă тĕрлĕ конкурса хутшăнма тытăннă çĕнĕрен çуралнă çемье ансамблĕ.

– Халăх умне тухса юрлама пуçланă чухне тăххăрăннччĕ эпир. Аслă аппан çемйипе пĕрлешсе тухрăмăр. Вăхăт иртнĕ май йыш улшăнчĕ. Паянхи куна пирĕн ансамбльте – 24 çын. Пурте – тăвансем. Çакă пулăшса пырать те пире. Эпир пĕр çемье. Савăнăçĕ те, кулянăвĕ те пулать-çке. Эпир вара пĕрне-пĕри ăнланса, пулăшса пыратпăр, – каласа кăтартать Дина Николаевна.

Сцена çине тухмалли кашни тума çемье хăй çĕлет. Нумаях пулмасть йĕркеленнĕ пулин те тӳрех илемлĕ çи-пуçпа илĕртнĕ вĕсем. Акă халĕ те конкурса хутшăнма тумсене ятарласа ĕлĕкхилле çĕлеттернĕ.

– Хам кăна 9 саппун янтăларăм. Пирне ялта пĕлĕшсенчен, тăвансенчен тупрăмăр. Тĕррисене ĕлĕкхине аса илтерекеннисене суйлама тăрăшрăмăр. Чалмасене те хамăрах ăсталарăмăр. Ачасем валли ятарласа пĕчĕк çăпата çыхтартăмăр, – коллектив ĕçĕпе паллаштарать Дина Кудряшова.



Ентешĕмĕрсем тĕрлĕ ăмăрту-конкурсра палăрнине илтме яланах кăмăллă. Кун пек ырă хыпарсем, тавах, илтĕнеççĕ-ха. Акă нумаях пулмасть республикăна çакнашкал тепĕр ырă хыпар çитрĕ: «Кăмăл» фольклор çемье ансамблĕ пĕтĕм Раççейри халăх юррисене шăрантаракансен "Завалинка" фестивальтен гран-при илсе таврăнчĕ.

Юрă-ташăпа çывăхланасси ашшĕ-амăшĕнчен куçнă тесе шухăшлать «Кăмăл» ертӳçи. Ашшĕ Николай Васильевич та, амăшĕ Евгения Васильевна та купăспа çав тери илемлĕ кĕвĕсем выляна. Амăшĕн йăмăкĕ те чаплă купăсçă пулнă. Ашшĕ-амăшне курса музыка инструменчĕпе вылями хăнăхнă та Дина Николаевна. Ансамбль ертӳçин ятарлă музыка пĕлĕвĕ çуккине те палăртмалла. «Кăмăла» çӳрекенсен хушшинче – бухгалтерсем, экономистсем, сварщиксем, лаборантсем, тухтăрсем, отставкăри çар çыннисем, цех пуçлăхĕсем тата тивĕçлĕ канурисем. Чун-чĕре юрлани пĕрлештерет тăвансене. Дина Николаевнăн мăшăрне Валерий Юлиановича та юрă-ташă тĕнчине ашшĕ-амăшĕ илсе кĕнĕ темелле-тĕр. Унăн тăванĕсем те çав тери илемлĕ ташлана. Ывăлĕсем те сцена ăстисем.

Дина Николаевнăн аслă хĕрĕ Алина те лайăх ташăçă иккенне палăртмалла, темиçе çул Анатолий Музыкантов патне çӳренĕ вăл. Кĕçĕнни Аня юрлама ăста. Чăваш эстрадине кăмăллакансем ăна Аня Элпике ятпа палласçĕ.

– Кăмăл туртнипе, юрласташлас килнипе пуçарнă эпир ансамбле. Сцена çине тухса пăхас килчĕ. Хăшĕ-пĕри «пулмасть пуль» тесе ассăн та сывларĕ. «Ун пек ан калăр – пулать», – тетĕп ялан. Çав вăхăтрах пĕр-пĕр конкурса кайнă чухне çĕнтеретпĕр тесе шухăшламалла маррине асăрхаттаратăп. «Тен, малти вырăна тухаймăпăр та – кăмăл хуçăлĕ. Епле пулать – çапла пулать», – тетĕп. Паллах, йывăрлăхсăр мар. Пуçăннă чухне пирĕн пачах нимĕн те çукчĕ-çке. Çавах малалла ăнтăлатпăр. Аттепе анне çӳлтен питĕ пулăшаççĕ тесе шухăшлатăп. Пĕррехинче тĕлĕк те тĕллентĕм. Пысăк сĕтел. Хăрах айккинче аттепе анне ларaççĕ. Эпĕ аякран купăс каласа килетĕп. Атте аннене ыталарĕ те: «Пăхха, епле илемлĕ калать», – терĕ. Вĕсенчен иртсе сĕтел тепĕр айккине вырнаçрăм. Манăн хыçра ансамбльти ытти тăван. Иккĕшĕ пирĕн çине пăхса çав тери савăнса каласççĕ. Çакăн хыççăн аттепе анне пирĕншĕн урăх тĕнчере те çав тери савăнаççĕ иккен тесе шухăшларăм, – чунне уçать Дина Кудряшова. Сывăх çыннисем яланах пулăшнине чунĕнчен ĕненнине пытармасть.

– Çĕнтертĕмĕр, татах мала тухмалла текен тĕллев çук пирĕн. Эпир юрласа-ташласа савăнассишĕн йĕркеленнĕ-çке. Хатĕрленнĕ чухне те пурте пĕр шухăшлă тата. Кашниех талпăнуллă, ансамбльшĕн мĕн те пулин тупма-тума тăрăшать, – тет хăйсене пĕчĕк те пысăк тесе палăртакан ертӳçĕ.

Çакна та каламалла. Коми Республикине кайиччен малтан «Кăмăл» Красногорск хулинче «Раççей пуянлăхне упракансем» конкурсра пулнă. Унтан та пĕрремĕш вырăн илсе килнĕ. Ун умĕн халăх юррисене шăрантаракансен «Алăкран тухрăм – тайăлтăм» республикăри 2-мĕш фестиваль-конкурса хутшăннă. Унта валли хатĕрленме пулăшнăшăн Дина Кудряшова Шупашкарти музыка училищин преподавательне Ирина Яковлевăна тав тăвать. Республикăри конкурсра 76 коллективран малтан 29-шне суйласа илнĕ. Темиçе тапхăрпа ăмăртнă хыççăн та «Кăмăл» пĕрремĕш пулса тăнă.

– Халиччен пулăшу курман эпир. Ыйтман та. Ара, эпир хамăр кăмăлпа йĕркеленнĕçке. Хальхинче вара Комине кайма Шупашкар район администрацийĕ транспорт уйăрчĕ. Купăс парнелетпĕр терĕç, – тав тăвать Дина Николаевна.

Çакăн пек маттурсемпе курса калаçнă хыççăн халăхăмăрăн пултаруллă ывăл-хĕрĕ чăннипех сахал маррине тепĕр хутчен курса ĕненетĕн. Тем тума та пĕлетпĕр эпир: ĕçлеме те, савăнма та. Тапать-ха чăвашра хастарлăх!

**Татьяна НАУМОВА.**

КОНКУРС

## Çĕнĕ Шупашкарсем çĕнтерчĕç

Иртнĕ эрнекун Çĕнĕ Шупашкарти «Химик» культура керменĕнче «Хĕрарăмсен чи лайăх канашĕ-2014» республика конкурсне пĕтĕмлетрĕç. Уява Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев тата унăн мăшăрĕ Лариса Юрьевна килсе çитрĕç. Çавăн пекех числава сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ольга Зайцева, Ашшĕсен канашĕн председателĕ Владимир Викторов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Сергей Михеев, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Бирюков хутшăнчĕç. Мероприятие Раççей Сывлăх сыхлавĕн министерствин тĕп акушер-гинекологĕ, медицина наукисен докторĕ, педагог, профессор Лейла Адамян – çитсе курчĕ.

Çемье уявĕнче Михаил Игнатьев чăваш хĕрарăмĕсем ĕçченлĕхпе, сăпайлăхпа, пултарулăхпа, юратма пĕлнипе ытти сенчен уйрăлса тăнине палăртрĕ.

– Демографи лару-тăрăвĕ лайăхланни, нумай ачаллă çемьесен, вăрăм ĕмĕрлĕ çынсен йышĕ ӳсни савăнтарать. Çакăн пек çитĕнӳсем пурришĕн республикăри хĕрарăмсем умĕнче пуç таятăп, – терĕ Михаил Васильевич.

Лейла Адамян Чăваш Енре çемье пĕлтерĕшне пысăка хунине, тĕрлĕ йăлайĕркепе тĕлĕнтерекен нумай нациллĕх пулнине каларĕ.

Конкурсра тĕрлĕ номинацире мала тухнисене саламланă хыççăн хумханаллă самант çитрĕ. Республикăри «Хĕрарăмсен чи лайăх канашĕ-2014» ята Çĕнĕ Шупашкарти хула уйрăмĕ çĕнсе илчĕ. Ăна Наталья Добрянская ертсе пырать. Общество организацине малашне те хастар пуласса шанса тĕслĕ принтерпа хавхалантарчĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПУЛĂМ

## Çĕр çинче чи кирли мĕн-ши?

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ тĕлне Чăваш наци музейĕ те «Çĕр çинче чи кирли мĕн-ши?» уяв программи хатĕрленĕ. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле килнĕ ачасем чи малтан Петрпа Февронь çветтуйсем çинчен хывнă историпе паллашрĕç, кайран çемье гербне ăсталарĕç. Кашниех ăна тĕрлĕрен курать. Пĕрисем ашшĕ-амăшне ĕç вырăнĕнче сăнласа кăтартрĕç. Повар та, милици ĕçченĕ те, пушарник та пурччĕ вĕсен хушшинче. Чи интереслĕ те хаваслă самантсене, юратнă ĕçĕсене те герб çине вырнаçтарчĕç. Çемье ăçта, мĕнле каннине те курма май пулчĕ. Пĕчĕккисем суйма пĕлмеççĕ, çавăнпа та вĕсен ĕçĕсем чĕрĕ, чăн пурнăçпа шайлашса тăраççĕ. Уява килнисем çемье альбомне пуянлатмалли пирки те манмарĕç, 19-мĕш тата 20-мĕш ĕмĕрсенчи тумсене тăхăнса асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕç. Ал ĕçне кăмăллакансем пусмаран «Телей кайăкĕ» ăсталарĕç. Шăпăрлансем сувенира килте – пурне те курăнакан вырăнта – çакса хурасси пирки каларĕç. Наци музейĕ умĕнчи лапамра кивĕ открыткăсемпе паллашма май пулчĕ. Раççей почти сĕннипе аслă çултисем тăванĕпĕлĕшĕ патне музейран хыпар вĕçтерме пултарчĕç. «Совет тапхăрĕнче çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне пĕрмай çыру-открытка вĕçтереттĕмĕр. Ĕлĕкхине тепре аса илтĕмĕр паян», – терĕç пухăннисем. Шăпăрлансене вара пуринчен ытларах чĕрчунсен тĕнчи, вĕсем хăйсен çурисене епле пăхни кăсăклантарчĕ. «Çĕр çинче чи кирли мĕнши?» ыйту хуравĕ тавра пĕчĕккисем нумай пуç ватмарĕç. «Çемье», – харăссăн хуравларĕç уяв хăнисем.

**Елена ГЛУХОВА.**

# Çемье – халăх, патшалăх тĕрекĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ
1-мĕш стр./.

Тĕслĕх вырăнне Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Белинскихсен çемйине илчĕ. Сакăр ача çуратса ÿстерекенскерсемпе мухтанмалăх пурах. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Роза Степановнăпа Иван Тимофеевич Степановсене те, Патăрьел районĕнчи Вера Георгиевнăпа Вадим Маркович Мешковсене те асăнчĕ.

– Кашни çемьенех çапла палăртма пулать. Сирĕн кашнийĕшĕнех хăвăрăн уйрăм истори, сирĕнтен кашниех чыспа хисепе тивĕç. Пĕр-пĕрне юратни, ачасем çитĕнтерни вăл телейпе савăнăç çеç мар, пысăк яваплăхпа капашсăр ĕç иккенне те аван чухлатăр. Кунта ларакан мăшăрсене нумай çул пĕрле пурăнса çемье пуянлăхне, хисепне, юратăва чыслăн та яваплăн упрама пултарни пĕрлештерет, – палăртрĕ Михаил Васильевич. Халăха çутта кăларакан Иван Яковлев халалласа хăварнине те аса илтерчĕ. "Çемьене упрăр. Вăл халăх, патшалăх тĕрекĕ", – тенĕ Иван Яковлевич.

ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев çавăн пекех республикăра çемье институтне çирĕплетессишĕн сахал мар ĕçленине каларĕ. Ача çуратассине ÿстерессишĕнех федерацире тата республикăра çирĕплетнĕ амăшĕн капиталне параççĕ. Пурăнмалли условисене лайăхлатассишĕнех çамрăк çемьесене субсидисемпе тивĕçтереççĕ. Çаксем пĕтĕмпех хăйсен ырă витĕмне кÿреççех. Ахальтен мар юлашки çулсенче республикăра нумай ачаллă çемьесен йышĕ 25 процент таран ÿснĕ.

Нумай ачаллă, ача усрава илнĕ çемьесене Михаил Васильевич чун пуянлăхĕшĕн, çепĕçлĕхĕшĕн, чăтăмлăхĕшĕн, ĕçĕшĕн, ÿсекен ăрăва ырă тĕслĕх кăтартнăшăн, нумай çул килĕштерсе пурăннăшăн уйрăммăн тав турĕ.

– Сирĕн килĕр ăшшине юрату яланах сыхлатăр! Çирĕп çемье – вăйлă Чăваш Ен тата юратнă Раççей никĕсĕ, – терĕ вăл.

18 çул пĕрле пурăнакан Наталия Николаевнăпа Валерий Александрович Белинскихсем "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" ордена тивĕçрĕç. Хăйсем каланă тăрăх, вĕсене ырра шанни, республикăшăн, çĕршывшăн тата тăван халăхшăн пархатарлă ĕçсем тума хатĕрри пĕрлештерет. 2010 çулта шăпах вĕсем Çĕнĕ Шупашкарта пĕрремĕш çемье ача сачĕ уçнăччĕ.

– Ашшĕ-амăшĕн ĕçне çапла хакланăшăн савăнатăп, тав тăватăп. Эпир пĕр-пĕрне, ачасене çав тери юрататпăр, пирĕн кил ача сассипе тулли пултăр тетпĕр. Çемьере юратупа килĕшÿ, ырăлăх хуçаланать. Çавăнпах çăмăл та. Тепĕр тесен ачасемпе ансат пулмалла та мар. Пурнăçра нимĕн те ахаль пулмасть, нумай вăй хума тивет. Атте-анне пулсан чи малтанах ачасем пирки шухăшлама вĕренетĕн. Вĕсене канлĕ, лайăх пултăр тетĕн, – палăртать Наталия Николаевна.

Сакăр ача амăшĕн чи кĕçĕнни – çулталăк çурăра. Вăл килĕнче кукамăшĕпе юлнăччĕ. Асли вара – Лиза – вунçиччĕре.

– Паллах, аслисем кĕçĕннисене пулăшаççĕ. Çÿçне тирпейлени те – пирĕншĕн пулăшу. Лиза йăмăкĕ-шăллĕ мĕн тăхăннине те сăнасах тăрать, – терĕ нумай ачаллă амăшĕ.

– Кил ăшшин вăрттăнлăхĕ тахçанах пурне те паллă ĕнтĕ: пĕр-пĕрне, ачасене юратсан çеç телейлĕ пулаятăн. Шăпах юрату çынсене мĕнпур йывăрлăха чăтса ирттерме вăй парать. Çак туйăм çынсене пĕр-пĕринпе çывăхлатать. Санăн хыçунта çирĕп тыл пуррине, хăть хăçан та алă парасса пĕлни темле йывăрлăхра та пулăшать. Чи кирли – пĕр-пĕрне хисеплемелле, юратмалла çеç, – тесе çирĕплетрĕ çемье пуçĕ Валерий Александрович та.

Вера Геннадьевнăпа Анатолий Петрович Яковлевсем вара "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орден медальне тивĕçрĕç. Пилĕк ача çитĕнтерекен çемье ыттисемшĕн тĕслĕх вырăннĕчех. Çакна вĕсем республикăри "Çулталăк çемйи" конкурсра пĕрре мар палăрни те çирĕплетет.

Çав тери капăрччĕ вĕсем çак кун. Пысăк наградăна тивĕçнине пĕлекенскерсем ăна илме ирех тăрса хатĕрленме пуçланине те систерчĕç. Пĕринчен тепри чипертерех хĕр пĕрчисем капăр çивĕчĕсемпе илĕртрĕç.

– Пирĕн хамăрăн парикмахер пур, – вăрттăнлăхне уçрĕ ăшпиллĕ амăшĕ.

– Паян, паллах, уявлама ресторана каятпăр. Тÿлекеннисем эпир, ачисем, пулăпăр. Манăн çемье – манăн тĕрек. Аттепе аннене тав! Вĕсене пула эпир паян кунта. Çак кун пурнăçăмăрсенчи чи телейлисенчен пĕри. Пире çапла савăнтарнишĕн республика ертÿçисене тав! Эпир паян чăннипех уяв иккенне туятпăр, сисетпĕр, – терĕ хĕрĕ Аэлита.

Аслисем те кăмăл-туйăмне пытараймарĕç.

– Ачасене çĕршыва юрăхлă çитĕнтересси – пирĕн тĕп тĕллев. Эпир нумай ачаллă пулнăран хваттере те тивĕçнĕ. Паянхи награда та – патшалăх пулăшăвĕ. Пирĕншĕн çакă пысăк савăнăç. Михаил Васильевичпа та килĕшетĕп: çĕршыв тĕрекĕ – çемьере. Çак тĕреке тытса пыма пире Иван Яковлевах халалланă. Республикăра нумай ачаллă çемьесене пулăшсах пыраççĕ, – çирĕплетрĕ кил хуçи.

– Çемье телейлĕ пулсан, пĕр-пĕрне килĕштерсен пурăнма та лайăх. Ачасене те тав. Вĕсем пĕрне-пĕри пулăшаççĕ, çапла майпа пире те. Çемье ăшши кашнин чĕринче пултăр. Эпĕ хам амăшĕ пулнă май ăна тытса пыма, упрама тăрăшатăп. Ачасен яланах киле килес килтĕр. Кашни çыннăн çемье, юрату пултăр. Пурте килĕштерсе пурăнччăр, – терĕ Вера Геннадьевна.

Çавăн пекех "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орден медальне Красноармейски районĕнчи Римма Ильиничнăпа Николай Павлович Игнатьевсем /6 ача/, Канаш районĕнчи Галина Валериановнăпа Иван Григорьевич Николаевсем /5 ача/, Куславкка районĕнчи Любовь Алексеевнăпа Борис Яковлевич Федоровсем /4 ача/ тивĕçрĕç.

"Юратупа шанчăклăхшăн" орден вара çак кун республикăри аллă çул ытла пĕрле пурăнакан ултă çемьен чыс-хисепне татах та ÿстерчĕ. Ăна Шупашкар районĕнчи Нина Васильевнăпа Алексей Яковлевич Андреевсем, Канашри Валентина Васильевнăпа Юрий Порфирьевич Кукловсем, Патăрьел районĕнчи Вера Георгиевнăпа Вадим Маркович Мешковсем, Çĕрпÿ районĕнчи Валентина Осиповнăпа Игорь Емельянович Никифоровсем тивĕçрĕç. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Уйпуçра пурăнакан Анна Андреевнăпа Василий Андреевич Афоркинсем те çак йышрах.

– Пире çапла хисеплессе шухăшламан та. 61 çул пĕрле пурăнатпăр. Паллах, килĕшÿре кун чухлĕ пурăнас тесен ăнлану, хисеп кирлĕ. Нумай çул пурăнма эрех-сăра сыпманни те пулăшать-тĕр. Ку таранччен ĕçкĕçике кайсан пĕр-пĕрне çавăтса курман эпир. Пилĕк ачамăрпа вĕсен мăшăрĕсем те усал йăлапа туслашман. Пурнăç пĕтĕмпех хĕрарăмран килет. Лайăх хĕрарăмран. Арăм ĕçме тытăнсан пÿрт никĕсĕ çĕрĕшет теççĕ. Арçын вăл шурă тесен шурă, хура тесен хура тет. Ертсе пымалла. Çавна тăватпăр темелле. Çак таранччен вăрçăнса та курман, çапăçса та, – чунне уçрĕ Анна Андреевна.

Çăмăл мар ачалăхĕ те 81 çулта пыраканскер куçĕ умĕнчен каймасть. Виçĕ ачаран пĕччен çеç тăрса юлать вăл. Малтан ашшĕне тулăх пурăннăшăн тытса хупаççĕ. Унтан амăшĕ чирлесе вилет. Выçăпа аптăранипех икĕ пĕртăванĕ те пурнăçран вăхăтсăр уйрăлаççĕ. Анна çеç хĕреснамăшĕн чÿречинчен çурлапа пĕрер улма вăрласа çиме пултарнипе чĕрĕ юлать. Тепĕр чухне пучах, хушăран тĕрлĕ курăквăрă çинĕ Анна аппа.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Роза Степановнăпа Иван Тимофеевич та "Юратупа шанчăклăхшăн" орден илнисен ретĕнче.

– Пилĕк ача çуратса ура çине тăратнă. Пирĕн вăхăтра килте темиçе çул ларман ĕнтĕ, ĕçе чупнă. Паян чылай канлĕрех. Ачасем пурте çитĕнсе çемьеллĕ ĕнтĕ. Мăнуксем те – тăххăр, вуннăмĕшне кĕтетпĕр. 50 çул пĕрле пурăнатпăр. Паллах, пĕр-пĕринпе килĕштермелле, итлемелле, ĕçлеме ÿркенмелле мар, – палăртать çемье çирĕплĕхĕн вăрттăнлăхне Роза Степановна.

– Пурнăçра чи хакли – пĕр-пĕрне ăнланни, пулăшни. Пĕтĕм телей çакăнта, – хутшăнать мăшăрĕн сăмахĕсем çумне Иван Тимофеевич.

Çапла, килĕшÿпе татулăхра пурăннине нимĕн те çитмест. Мĕнпур мăшăра юратура пурăнма сунатпăр та!

**Татьяна НАУМОВА.**

УЯВ

# Вулавăш тусĕсем



Улăхра унран хитререх чечек пур-ши? Унта та кунта илĕртÿллĕн ларакан сарă куçлă шап-шурăскер çинчен куça илме çук. Сăмахăм салтак тÿми пирки. Çак сăпайлă та черчен курăк уяв палли пулма та тивĕçнĕ. Утă уйăхĕн 8-мĕшĕ – Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ. Чунтан савакансем, мăшăрсем пĕр-пĕрне салтак тÿми парнелеççĕ. Çак уява 13-мĕш ĕмĕрте Муромра пурăннă Петрпа Феврони çветтуйсене халалланă. Асăннă мăшăра Христос тĕнне ĕненекенсем çемье хÿтĕлевçисен вырăнне хураççĕ. Петрпа Феврони пурăннă вăхăтрах ытти мăшăршăн тĕслĕх пулса тăнă. Тасан, хитрен юратма пĕлнĕ вĕсем. Петр йывăр чирленĕ. Кнеçе Рязань тăрăхĕнчи Ласковая ялĕнчи вăрманçă хĕрĕ Феврони сыватнă. Чиперккене Петр качча илнĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне питĕ юратса, килĕштерсе пурăннă. Çутă тĕнчерен те пĕр кунрах – утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче – уйрăлнă.

Унтанпа тĕне ĕненекенсем çак кун çемье управçисене чыслаççĕ. 2008 çултанпа эпир ăна Раççейре уяв пек анлăн паллă тăватпăр. Кашни çулах утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче хуласенчи тата район центрĕсенчи мăшăрлану кермене сенче нумай çул пĕрле пурăнакан мăшăрсене чыслаççĕ, "Юратупа шанчăклăхшăн" медальпе хавхалантараççĕ.

Юнкун ЧР наци библиотекинче те Çемье, юрату, шанчăклăх кунне халалласа "Çемьепе вулатпăр" ятпа уяв иртрĕ. Вулакансем чи малтан ача-пăча залĕнчи "Çемье телейĕн управçисем" ятпа йĕркеленĕ пуян куравпа паллашрĕç. Вулавăш ĕçченĕсем шăпăрлансене, вĕсемпе пĕрле килнĕ амăшĕсене, кукамăшĕ-асламăшне çемье пĕлтерĕшĕ, унăн пуянлăхĕпе илемĕ пирки каласа кăтартрĕç. Шел те, ашшĕсем курăнмарĕç уявра. Пĕчĕк вулакансен хушшинче "Тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр-и?" конкурс иртрĕ. Тупсăмне пуринчен малтан тавçăрса илме ĕлкĕрекенсене парнесемпе – хутран касса кăларнă салтак тÿмисемпе – хавхалантарчĕç. Чи нумай вулакан çемьесене парнесемпе чысларĕç.

Шупашкарта пурăнакан Наташа Кириллова вулавăша пĕр çул та икĕ уйăхри ачипе часчасах çÿрет. Вĕсене кунта пурте палласçĕ. Амăшĕ пĕчĕк Кирила чĕрчунсемпе, пахчаçимĕçпе, улма-çырлапа паллаштарать. Иккĕшĕ юмах кĕнекисем вулаççĕ.

Вулавăшпа туслă Светлана Золотова центра Кăнтăр поселокĕнчен куçса килнĕ, малтан Л.Толстой библиотекинчен тухма пĕлменскер тÿрех кунта çырăннă. Икĕ çул çурă туслă вăл вулавăшпа. Истори, юрату çинчен вулама кăмăллать Светлана Алексеевна. Фантастика произведенийĕсене килĕштерет. Мăнукĕсене те кĕнекепе туслă пулма хăнăхтарать. Çав вăхăтрах 88 çулти амăшне те пăхма ĕлкĕрет. "Паян ирех тăрса чиркĕве кайрăм, Петрпа Феврони ячĕпе çурта çутрăм. Çемьерен хакли мĕн пултăр", – терĕ Светлана Золотова вулакан.

Уявра ачасем çĕнĕ кĕнекесемпе паллашрĕç, вăйăсем вылярĕç.

ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин ĕçченĕсем çак кунах Шупашкарти "Дорисс" паркра "Салтак тÿми çыххи" акци ирттерчĕç. Хула çыннисене саламлама ятарласа урама тухрĕç. Вулавăшра тăрăшакансем паркра уçăлса çÿрекенсене Петрпа Феврони çинчен каласа кăтартрĕç, Муром çветтуйĕсем çинчен çырнă кĕнекесемпе паллаштарчĕç, иртен-çÿрене ырă сунса хăйсен аллипе ăсталанă салтак тÿмисем парнелерĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕсем.



ФОРУМ

# Тăлăх турата Турă сыхлать

**2012-2017 çулсенче ачасен интересĕсене хӳтĕлесе хута ямалли Наци стратегине пурнăçланă май утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче Ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче республикăри ача усрава илнĕ çемьесен 3-мĕш форумĕ иртрĕ. Пухăнса калаçмалли темăна та çав тери анлăн палăртнă: "Чăваш Республикинчи ача усрава илнĕ çемьесене психологипе педагогика, право, медицинăпа социаллă хӳтлĕх енчен пĕтĕмĕшле пулăшасси".**

Форума опекунсемпе попечительсем, ача усрава илнисем, илме хатĕрленекенсем, ача вăхăтлăх усракан ашшĕ-амăшĕ, опекăпа попечительство органĕсен специалисчĕсем, ача çурчĕсен, интернатсен ертӳçисемпе педагогсем, ача йышăннă çемьесене пулăшакан кураторсем хутшăнчĕç. Пĕтĕмпе – 500-е яхăн çын. Вĕсен йышĕнче Мускавран, Пенза облаçĕнчен, Мари республикинчен килнĕ хăнасем те сахал мар.

Ирхине форум делегачĕсем вунă дискусси лапамĕнче, ăсталăх-классенче, тренингсенче ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене çемьене вырнаçтарас ыйтусем тавра калаçрĕç. Ача усрава илес шухăшлисене ку утăма тунисем хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç, ачапа малтанхи вăхăтра еплерех тытмаллине каласа кăтартрĕç, усрав çемьесемпе общество организацийĕсен мĕншĕн хутшăнса ĕçлемеллине те сӳтсе яврĕç.

Апат хыççăн вара пленарлă пуху иртрĕ. Ларăва ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова, ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Ивановпа унăн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова, ЧР Ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Вячеслав Рафинов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов тата ытти сумлă хăна хутшăнчĕç.

– Эсир ют ачасене хăвăр хӳттĕре илсе, чун ăшшине парнелесе тăван пепке пек çитĕнтеретĕр. Ку вăл чăннипех хăватлă пулăм. Чăнласах пысăк чĕреллĕ çынсем çеç çакнашкал утăма тăваяççĕ, – терĕ Михаил Васильевич. Усрава пĕрре çеç мар, вуншар ача илекен пуррине те каларĕ. – Эпир пурте кашни ача çемьере çитĕнмеллине, ашшĕ-амăшĕн ăшшине, хӳттине туймаллине пĕлетпĕр. Общество ачана тивĕçлĕ ӳстермелли хутлăхран – çемьерен – лайăхраххи хальлĕхе нимĕн те шухăшласа кăларман-ха, – палăртрĕ вăл.

Усрава нумай ачана илнисене ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканăн Тав çырăвĕпе, хăш-пĕр çемьене "Юратупа шанчăклăхшăн" медальпе наградăларĕç. Сцена çине "Çемье вучахĕ" конкурс çĕнтерӳçисене те йыхравларĕç. Ку ята Çĕрпӳ районĕнчи Львовсен çемйи тивĕçрĕ.

Çемьере кăна ача чăннипех телейлĕ те çирĕп тĕллевлĕ çитĕннине кашни тухса калаçакан çирĕплетрĕ. Тăван ашшĕ-амăшĕпе пурăнма май çук тăк тăлăхсене усрав çемьесене вырнаçтарса вĕсен шутне май пур таран чакармаллине те пĕрре мар илтрĕмĕр çак кун. Алена Аршинова-и, Владимир Иванов-и, Вячеслав Рафинов-и – пурте ачасен çемьере çитĕнмеллине çирĕплетрĕç.

Раççей Вĕренӳпе ăслăлăх министерстви çумĕнче йĕркеленнĕ "Ача усрава илнĕ çемьесен азбуки" клубăн директорĕ Дарья Машкова ача усрава илме хатĕрленекенсемпе те нумай ĕçлемеллине каларĕ. Ара, çын мĕн каласран шикленнĕренех çак утăма тума тăхтакан та сахал мар-çке. Çавăнпах тĕрлĕ клуб ĕçлет те. Вĕсемпе Интернет урлă çыхăну тытма пулнине те асăрхаттарчĕ вăл.

– Асанне: "Тăлăха пăхни – чиркӳ лартнă пекех сăваплă", – тетчĕ. Эсир – чиркӳ хăпартакансем. Чиркӳ хăпартни вара Турăпа калаçниех пулать. Эппин, сире Турă пĕлетех. Сирĕн ырă ĕçе те курать. Эсир хăвăр ачасемшĕн çеç мар, ыттисемшĕн те ĕçлетĕр. Çакăншăн пысăк таймапуç сире! – терĕ ЧР вĕренӳ министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Владимировна.



● ЛЬВОВСЕН ÇЕМЙИ.

Усрава илнĕ ачасемпе çăмăл маррине те пĕлет вăл. Кĕçĕннисен чун ыратăвне чухланине те систерчĕ. Çавăнпах усрава илнĕ ашшĕ-амăшне май пур тăк ачисене чăн тăванĕсемпе хутшăнма ирĕк пама вĕренме чĕнсе каларĕ те.

Форум вăхăтĕнче Ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕн фойинче кунĕпех алă ĕçĕсен куравĕ, сывлăх центрĕ, консультаци пункчĕсем ĕçлерĕç.

## Футбол команди

Форума хутшăннă, наградăсене тивĕçнĕ усрав ашшĕ-амăшĕн йышĕнче Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнче пурăнакан Уткинсем те пулчĕç.

– Манăн çемье пысăк, çирĕп, ĕçчен тата шавлă, – терĕ хăйĕнпе паллаштарнă май Каролина Анатольевна.

Ара, шавлă пулмасăр, хĕрарăмăн вуникĕ ача-çке. Виççĕшĕ хăйĕн варĕнче йăтса çӳренисем пулсан, тăххăрăшĕ – усрава илнисем.



– Çуратнисенчен чи кĕçĕнни кăçал салтакран таврăнмалла ĕнтĕ, ун вырăнне хĕсмете усрава илнисенчен чи аслине ятăмăр. Чăваш йăли-йĕркипех ăсатрăмăр ăна та. Манăн килте хамăн футбол команди. Аслисем çеç иккĕшĕ – хĕр, ыттисем пурте – арçын ачасем, – терĕ Ыхраçырмари вăтам шкулта вырăс чĕлхи вĕрентекен.

Хĕрарăм калашă тăрăх, ача усрава илес шухăш патне мăшăрĕпе Анатолий Арсентьевичпа иккĕшĕ 2007 çулта, Çемье çулталăкĕнче, килсе тухнă.

– Реклама çав тери вăйлă пыратчĕ вăл вăхăтра. Литература вĕрентнĕ май тăлăх ачасем çинчен çырнине те чĕре витĕр кăларатăп. Çапла икĕ ачана – Кольăпа Андрея – усрава илтĕмĕр. Çулталăкран Кольăн шăллĕ тупăнчĕ те ăна икĕ кунтах илсе килтĕм. Вăл та Андрей ятлă. Чи çывăххисенчен пĕри тесен те юрать ăна. Ултă çултан ӳстеретĕп вĕт, халĕ 7-мĕш класс пĕтерчĕ ĕнтĕ. Сăнӳкерчĕк пăхсах килĕштертĕм ăна. 2013 çулта çемьене тата тепĕр ачапа пуянлатас терĕмĕр. Çак тĕллевпе Çĕмĕрлери ача çуртне кайрăмăр. Çуллахи каникул пулнă май пĕр ача вырăнне тăваттă парса ячĕç пире. Виçĕ пĕртăван тата тепĕр ача. Уйрăм ачана малтанах çемьене илетĕп тесе шантартăм. Хайхи пĕри те каялла каясшăн пулмарĕç. Пĕртăвансене уйăраймарăм. Çапла усрава илнĕ ачамсен шучĕ çичче çитрĕ.

Ача çуртĕнчен вара питĕ нумай лайăх мар йăла килет. Туртни, ют кĕсьене кĕрсе тухасси, улталасси пур. Вăрттăнлăх та нумай. Вĕсене йĕркене кĕртес тесен ĕç хушмалла, шанмалла. Паянхи çамрăксем пурнăç çине урăхларах пăхаççĕ паллах – кахалрах. Ĕçе хăнăхтармалла, спортпа туслаштармалла. Çавăнпах эпĕ шкулта вĕрентекенсене те асăрхаттарсах хунă: шкулта мĕнле мероприяти иртет – манăн ачасене пур çĕре те явăçтармалла. Йывăрлăхсенчен хăрамалла мар тесе вĕрентетĕп вĕсене, – терĕ нумай ачаллă амăшĕ. Çапла, ăна пурте "анне" тесе чĕнеççĕ.

– Усрава илнĕ ачасемпе çăмăл мар. Чăтăмлăх кирлĕ. Малтанах ачана сăнамалла, вăл мĕнлине курмалла, ăна çитменлĕхĕсемпе йышăнмалла. Кайран çулталăк хушшинче çак йăласенчен пистермелле, йĕркене кĕртмелле. Ялта пĕрмай ĕçекенсем пур вĕт. Çавсене усал тĕслĕх вырăнне хуратăп. Ĕçлесен пурнăç пулатех тетĕп.

Тавракурăмне тĕрĕс аталантарма тăрăшатăп. Суйнине чăтма пултараймастăп. Айăпа кĕрсен те явап тыттаратăп – урай çутаратăп. Итлеççĕ. Сăлтавĕ хăйсенче иккенне те лайăх чухлаççĕ. "Сирĕн пирки япăх калаçмалла мар", – тетĕп сĕтел хушшинче ларнă чухне те. Кӳршĕ-аршăсене пулăшма та яратăп. Пирĕн килте дежурство. Кашни кун черетпе урай çăваççĕ. Çара каякannисем те çак йĕркенех пăхăннă. Салтаксене çутараççĕ-çке. Дежурнăйăн сĕтел таса пулнине те тĕрĕслесех тăмалла. Çакă пирĕн йăлана кĕнĕ. Ирхине выльăхсене хамăр пăхатпăр. Пилĕк ĕне сăватăп ĕçе кайиччен. Ултăçичĕ пăру усратпăр. Вĕсене кăкарасси, киле илсе килесси вĕсем çинче. Уçăлмалла пек çеç вĕт-ха вăл. Эпĕ вĕрентмесен ĕçе кам хăнăхтарĕ вĕсене? – чĕкеç чĕпписемшĕн канăççăрланнăнах тытать хăйне Каролина Анатольевна.

Лăпкă пурăнма вăхăт та çук йышлă çемьен. Спортпа та туслă Уткинсем. Ывăлĕсем футболла выляççĕ, çăмăл атлетикăпа ăмăртусене хутшăнаççĕ. Кашнинех йĕлтĕр туянса панă. Çавăнпах хĕлле ашшĕ Анатолий Арсентьевич йĕлтĕр йĕрĕ хывтарса кашни кун уй-хире илсе тухать. Кам мĕн чухлĕ ярăннине те шутласах пырать арçын.

– Ачасене активлă тума тăрăшатпăр. Сывă пурнăç йĕрки – пирĕн çемье йăли, – тесе çирĕплетрĕ Каролина Уткина.

**Татьяна НАУМОВА.**

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Тăпăрчă хăпартăвĕ



**1 кг тăпăрчă, 250 грамм маргарин, 0,5 стакан манна кĕрпи, 1,5 стакан сĕт, 1 стакан сахăр, 7 çăмарта, 0,5 чей кашăкĕ сÿнтернĕ апат соди, пĕçермешкĕн тип çу кирлĕ.**

Тăпăрча сахăрпа, çăмартапа хутăштарса лайăх пăтратмалла, ирĕлтернĕ маргарин хушмалла. Манна пăтти пĕçерĕр те тăпăрчă хутăшĕпе пĕрлештерĕр. Хутăша çу сĕрнĕ çатмана хурăр, духовкăра 30-40 минут пĕçерĕр.

### Килти сыр

**3 литр сĕт, 2 çăмарта, 100 грамм услам çу, 1 чей кашăкĕ апат соди, тутă каламалăх тăвар кирлĕ.**

Сĕте ăшă çĕре йÿçме лартмалла. Йÿçĕхнĕ хыççăн тăпăрчă пуличчен ăшăтмалла. Марля витĕр сăрăхтармалла.

Тăпăрча çăмарта, услам çу, тăвар, сÿнтернĕ апат соди хушăр, пĕçерме лартăр. Тĕпне ларасран пăтратсах тăрăр. Сыра формăна хурса сивĕтмĕше лартăр.

### Рулет

**5 апат кашăкĕ çăнăх, 5 апат кашăкĕ сахăр, 5 апат кашăкĕ типĕтнĕ сĕт, 3 çăмарта, 1/3 чей кашăкĕ уксуспа сÿнтернĕ апат соди, ăшне хумашкăн варени е повидло кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа хутăштармалла, çăнăх, типĕтнĕ сĕт, апат соди хушса лайăх пăтратмалла. Чустана тип çу сĕрнĕ çатмана хурăр. Духовкăра 10-15 минут пĕçерĕр. Вĕри коржа варени е повидло сĕрĕр, рулет евĕр çавăрăр.

### Кăпăркка печени

**7 стакан çăнăх, 2 çăмарта, 350 грамм маргарин, 2 стакан сахăр, 0,5 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Çăнăх, сахăр, апат соди, çемçе маргарин, çăмарта хутăшне çăрмалла. Çуррине çу сĕрнĕ çатмана хумалла, джем сĕрмелле те юлашки чустапа витмелле. Печение духовкăра пĕçермелле, сивĕнсен тăваткаласа касмалла.

### Пулă икерчи

Шăмминчен уйăрнă минтай е урăх тĕрлĕ пулла вакăр, кастрюле хурăр, çăмарта, 1 апат кашăкĕ майонез, çăнăх, тăвар хушăр. Йăлтах пăтратмалла, тип çура ăшаламалла.

### Пылак "йăва"

**1 литр сĕте вĕреме кĕртмелле, 1,5 стакан сахăр, 0,5 чей кашăкĕ корица хушмалла, пăтратса вăйсăр çулăм çинче 10 минут вĕретмелле – шерпет хатĕр.**

Çатмара 200 грамм услам çу е маргарин ирĕлтерĕр, 0,5 килограмм манна кĕрпи хушăр та хĕрлĕ тĕслĕ пуличчен ăшалăр. Шерпет ярăр, вĕтетнĕ мăйăр хушăр та пăтратăр. Хутăш хытиччен пăтратса пĕçерĕр. Сивĕтĕр, пысăках мар çавракасем йăвасем тăвăр, вĕтетнĕ кокосра йăвалăр. Ăшăх турилккене куполаса хурăр.

### Риспа кăмпа

**300 грамм кăмпа, 1 сухан, 1 кишĕр, хăйма, пăрăç, лавр çулçи, тутă каламалăх техĕмлетекен çимĕç кирлĕ.**

Тип çура сухана, кишĕре, кăмпана уйрăммăн ăшалăр. Ун хыççăн йăлтах пĕрлештерĕр те çиелтен хăйма ярăр /сĕт те юрать/, пăшăхласа пĕçерĕр, пăрăç, лавр çулçи, техĕмлетекен ытти çимĕç хушăр. Риса уйрăммăн пĕçерĕр, ăна пысăк савăта хурăр, варрине пăшăхласа пĕçернĕ çимĕç ярăр.

### Итальян салачĕ

**Пĕçернĕ 300 грамм чăх какайĕ, пĕçернĕ 200 грамм макарон, тĕтĕмленĕ 100 грамм какай, чĕрĕ 2 помидор, тăвар, тутă каламалăх майонез кирлĕ.**

Чăхха, тĕтĕмленĕ какая, помидора тăваткаласа турăр, пĕрлештерсе пăтратăр.

Макарона вĕтетмелле, ытти апат-çимĕçпе хутăштармалла. Салата тăвар сапăр, тутă каламалăх майонез ярса пăтратăр.

### Хăмла çырли кукăлĕ

**2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 50 грамм маргарин, 0,5 стакан тип çу, 0,5 стакан кефир, 2 апат кашăкĕ хăйма, 250 грамм çăнăх, пĕр чĕптĕм апат соди, 1 стакан хăмла çырли е урăх çырла, сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Çăмартапа сахăра лайăх пăтратмалла, ирĕлтернĕ маргарин е услам çу, тип çу, кефир, хăйма, çăнăх, тăвар хушмалла, лайăх пăтратмалла. Хатĕр чустана тип çу сĕрнĕ çатмана хурăр, çиелтен хăмла çырли сапăр, кукăле духовкăра 40-50 минут пĕçерĕр. Çиелтен çырлапа илемлетĕр, сахăр çăнăхĕ сапăр.

СЫВЛĂХ

# Пуçа ĕçлеттерме

Çакăн пек хускану тума сĕнетпĕр. Ăна ирхине пурнăçласан аванрах. Хăлха çаккине хывса хумалла. Тÿрĕ тăмалла. Чĕлхене çăвар маччине, çÿлти шăлсен хыçне перĕнтерĕр – "Ла" тесе калама хатĕрленнĕ евĕр. Хусканăва пурнăçласа пĕтеричччен те унтан ан хускатăр.

Сулахай алă пÿрнисемпе сылтăм хăлхан аял пайĕнчен, эрешсен çакакан вырăнтан тытăр. Асăрхăр: пысăк пÿрне хăлхан мал енче пулмалла. Сылтăммипе вара сулахай хăлхана тытмалла. Пысăк пÿрни каллех мал енче пулмалла. Икĕ хăлхине те пÿрнесемпе пĕр харăс пусмалла. Сулахай алла сылтăмми айĕнче, кăкăр çумĕнче, тытмалла.

Сăмсапа сывланă май кĕлеткене тÿрĕ тытса майĕпен кукленсе ларăр. Ларнă чух сывлăша тытăр, ура çине çĕкленме пуçласан кăна ăна сывласа кăларăр.

Çапла майпа 15-21 хутчен ларса тăмалла. Пÿрнесене – хăлхаран, чĕлхене çăвар маччинчен вĕçертмелле маррине манса ан кайăр.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Кролик ÿстеретпĕр



Кролика апатлантарасси йывăр мар. Анчах та тĕрĕс çитерсен кăна сывă ÿсет вăл. Ку чĕрчун кишĕр çеç мар, ытти пахча çимĕçе, улма-çырлана, курăка та юратсах çиет. Таса шыв та парсах тăмалла. Кроликшăн чĕрĕ курăк уйрăмах усăллă.

Пахчаçимĕçре белок, витамин, минерал нумай. Пĕр кунра вицĕ тĕрлĕ пахчаçимĕçпе сăйлама пултаратăр. Çавăн пекех пăрса, салат, тĕслĕ купăста кăмăллать кролик. Улма-çырлана вĕтетсе памалла е вĕсенчен салат хатĕрлемелле. Кролик панулми, груша, апельсин, персик кăмăллать.

Пучахлă ÿсен-тăран – рационти углевод çăлкуçĕ. Вĕсем выльăха вăй параççĕ. Хывăх, авăртнă сĕлĕпе урпа пăтратса памалла. Типĕ апата сĕтпе е шывпа пăтратмалла. Çĕварламалли амасене пăшăхласа параççĕ.

Кролик кукша пуç, клевер, кăшкар ути юратать. Анчах та тин çулнă курăка чĕрчуна пама юрамасть. Утă – клетчатка курăкĕ, вăл яланах валашкара пултăр. Типĕ курăк апат хуранне çăм чăмакки лекесрен те сыхлать.

Кăшламалли патаксене читлĕхрех тытăр, унпа чĕрчун шăлĕсене хăйрĕ.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Хăяр... çумкурăка килĕштерет

Хăяр чĕрĕлле те, тăварласан та питĕ тутлă. Маринадланине те кирек кам та килĕштерет. Кашни çулах лайăх тупăш илес тесен хăш-пĕр вăрттăнлăха шута илме тивет. Çимĕç тымарĕ епле аталаннинчен те нумай килет. Вăл çĕрме тытăннине асăрхасан тÿрех калчан тунине çĕр çине лăпчăнтарса нÿрĕ тăпра сапăр. Сарăхнă çулçисене татса пăрахма ан манăр.

Тĕлĕнмелле те, хăяр сĕт юратать-мĕн. Унпа кашни икĕ эрнерен, шывпа хутăштарса /1:2 шайлашупа/ шăвармалла. Сĕт хăяра хăвăртрах ÿсме, тунисене çирĕплетме пулăшать.

Шăрăх кунсенче калчана час-часах, кунне пĕр хутчен, ăшă шывпа шăвармалла. Сывлăш температури чаксан тата ăмăр çанталăкра çимĕçе нÿрĕк ытлах кирлĕ мар. Хăяра каçхине шăварма тăрăшмалла.

Йăран хушшине тислĕк, пăчкă кĕрпи, вакланă улăм, торф, çатăрка хурса тухни аван. Анчах та çак материалсем хăяр тунине лексе тăмалла мар. Тин çеç çулнă утăпа усă курма юрамасть, вăл çимĕçе чирлеттерме пултарĕ.

Хăяр йăранне вăхăтра кăпкалатма тăрăшăр. Çĕр çурăлни тăпрари сывлăш çитменнине пĕлтерет. Çавна май вăл ÿсме пăрахать, чечексем тăкăнаççĕ.

Кашни çумăр хыççăн тата шăвармассерен çĕре 3-4 сантиметр тарăнăш кăпкалатсах тăрăр. Тымара амантасран асăрханăр. Йăран çине торф сапсан çĕре çемçетме кирлĕ мар, унтан-кунтан сенĕкпе шăтарса тухни те çителĕклĕ.

Кĕл тата органика – симĕс им-çам е утă шывĕ – хăяршăн яланах лайăх.

Çимĕç шалча пăрçипе, пăрçапа, кольрабипе, купăстапа, сельдерейпе, салатпа юнашар уйрăмах аван ÿсет. Çурçĕр енчен куккурус лартни аван. Хăяр йăранĕ çумĕнче помидор пулмалла мар. Мăян тата пилеш курăкĕ асăрхасан çăлса тăкма ан васкăр, çак çумкурăкĕсене хăяр шутсăр килĕштерет.



# Купăста хÿтĕлевçисем

Купăстана сăтăрçăсенчен им-çам сапмасăрах ÿстерме пулать. Йăранăн икĕ енĕпе бархатцы чечек ÿстермелле. Вăл хăйĕн шăршипе сиенлĕ хурт-кăпшанкăна хăратать, пăхма та илемлĕ. Вĕсен çумĕнчи тепĕр йăран çинче вара – сельдерей. Унăн та шăрши çав тери вăйлă. Çапла майпа хурт таврашĕ купăстана асăрхамасть те, пымасть те.

# Кишĕр тухăçĕн вăрттăнлăхĕ

Кишĕре юлашки хут çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче сайратаççĕ. Кайран тăпăлтармалла мар, мĕншĕн тесен пĕрне туртса кăларнă чухне юнашаррин тымарĕ сиенленет. Çăвĕпе сайралатса çиме уйрăм вырăна ир пулакан кишĕр акса хăвармалла.

Час-часах шăвармалла мар, анчах шăварнă чухне аванах сапмалла. Тăтăшах, анчах кăштахшар çеç шăварнă чухне кишĕр "сухалланать". Айккинчен тухнă вĕтĕ тымарĕсем шыва ĕмсе илеççĕ, тĕп тымарĕ вара вилет.

Утă-çурла уйăхĕсенче тымар çимĕç ÿссе вăй илет. Сывлăш температури чакнăçемĕн кишĕр вăрах вăхăт упранма хатĕрленет.



# Авăтатчĕ куккук



Çамрăклăх çичĕ çунатлă теççĕ. Пирĕнтен телейлĕреххи пурччĕ-ши ун чухне?! Манăн чĕрене кÿршĕ ял ачи пек халиччен никамах та вут хыптарса курман. Вуннăмĕшне куçсан икĕ класа пĕрлештерчĕç. Пĕр парта хушшинче ларакан тантăшăм шăп çав вăхăтра урине хуçнăччĕ. Сĕтел çитменнипе сана манпа юнашар лартрĕç. Кам пĕлет, тен, эсĕ вырăс чĕлхипе сочинени çырма юратманниех туслаштарчĕ пире? Мĕнпур предметпа пиллĕкчĕ, вырăс чĕлхипе литературине кăна юратмастăнччĕ. Мана вара сочинени çырма çур сехет те çителĕклĕччĕ. Мĕн йывăрри унта, вуласа тухнă произведени тăрăх хам валли те, сан валли те самантрах виçĕ-тăватă страница шăрçаласа хураттăм. Кайран хăв аллупа çырса илмелли кăна юлатчĕ. Эсĕ мана кашнинчех чи юратман предметпа – физикăпа – задачăсем шутлама пулăшаттăн. Пĕррехинче кĕтÿ кĕтме тесе эпĕ пĕр кунлăха шкултан юлнăран хатĕр сочинение санăн киле пырса илме тиврĕ. Каç та пулнăччĕ ĕнтĕ, умри сак çинче экзаменсем, кайран ăста çул тытасси пирки вăрахчен калаçса лартăмăр. Тепĕр кунне сумкăран пĕчĕк çыру тухрĕ. "Мĕн пулчĕ манпа, ăнланмастăп, сана курмасăр пĕр кун та пурăнаймастăп", – тенĕччĕ унта. Паллах, никамăн та мар, санăн почерку. Тепĕр кунне класа килсе кĕрсенех хĕрелсе кайрăн. Пĕр-пĕринчен именнипе кунĕпе те нимĕн чĕнмерĕмĕр. Ман тĕле лайăх пĕлекенскер каçхине кил умĕнчи çĕмĕрт йывăççи умне пырса тăтăн. Çав кунран чĕре лăпкăлăха çухатрĕ те. Шкултисенчен пытарайăн-и, пирĕн туслăх пирки учительсем те пĕлсе çитрĕç.

Эсĕ çÿллĕ сăрт çинчен мотоциклпа çутатса аннине курсанах чĕре кăлт! кăлт! тапма тытăнатчĕ. Пĕлетĕп, тепĕр вунă минутран пирĕн кил умне çитсе чарăнатăн. Çук, çук, кÿршĕсен умне. Унсăрăн аттепе анне чÿрече каррине сирсе пăхмасăр чăтайĕç-и? Хветура мăнаккан сакки çинче тул çутăлма тытăничченех кăвакарчăн чĕпписем пек пăшăлтатса ларattămăр. Алăран хыттăн чăмăртани, питĕмрен ачашшăн сĕртĕнни, кăпăшка вăрăм çÿçĕмпе выляни... Акă вăл яш чухнехи чи черчен те таса туйăмсем.

Çывăхри катана хăмла çырли çиме кайнине халĕ те манаймастăп. Чăтлăхра пĕр чарăнми куккук авăтатчĕ çав каç. Тÿпере пин-пин çăлтăр вылятчĕ. Çупкăм-çупкăм пылак çырлине астивмерĕмĕр. Темшĕн, пĕр-пĕрин çинчен куç илейменнипе-ши? Юратупа тулнă икĕ чĕрене кам тытса чарайĕ? Уйăх çутинчен вăтанмасăрах икĕ тута пĕрлешрĕ. Ĕнтĕ çĕр тĕпне анса кайманни кăначчĕ. Пĕрремĕш хут, йăлтах пĕрремĕш... Эсĕ илсе тухма ыйтнă сăнÿкерчĕкĕме аллунтан тыттартăм те ансăр сукмак тăрăх ял еннелле вĕçтертĕм. Пĕлетĕп, хăваласа çитетĕнех. Чăн та, эсĕ ман хыçрах, çăмăллăн çĕклесе илтĕн те хăв çумна ачашшăн, кĕленчене ватса ярасран шикленнĕн, çупăрларăн. Пылак туту каллех çепĕççĕн чуптурĕ. Акă вăл ман пурнăçăмри куç хупман пĕрремĕш каç. Санран вăтаннипе тепĕр кунне урама та тухмарăм. Мотоцикл кÿршĕсен умне яланхи вăхăтрах пырса чарăнчĕ. Миçеччен лартăн-ши, тапранса кайнине сисмерĕм. Сан çинчен шухăшласа выртса тутлă ыйха путнă.

Вунă çул иртрĕ унтанпа. Хăмла çырли уçланкинче иртнĕ шăматкун иксĕмĕр ăнсăртран тĕлпултăмăр. Ăнсăртран мар пулĕ, пĕлнĕ эсĕ эпĕ яла килнине. Такам систернех сана. Çав вăхăтри пекех чăтлăхра пĕр чарăнми куккук авăтрĕ. Хăмла çырлийĕ те хĕп-хĕрлехчĕ. Хальхинче ăна хăв татса çитертĕн. Пин-пин ыйту... Çак таранччен ăста çÿренĕ-ши эсĕ? Тĕрлĕ сăлтава пула эпир пĕрле пулаймарăмăр. Пĕлетĕп, чĕре тĕпĕнчи çулăм вара халĕ те сÿнмен. Сансăр пуçне никам валли те вырăн çук унта. Эсĕ пăртак та улшăнман. Малтанхи пекех юратса пăхатăн ман çине. Ĕненетĕп халь, чăн-чăн туйăмсем нихăçан та вилмеççĕ иккен. Шăпи акă çĕнĕрен тĕлпултарчĕ. Ĕнер телефон çине шкул вăхăтĕнчи пекех çыру килчĕ: "Сана курмасăр малашне пĕр кун та пурăнаймастăп".

**Елюк ШЕРЕПИ.**

# Пурлăх та илĕртмест

Юратаççĕ хĕрсем пуçлăх ывăлне. Ун валли ашшĕ кермен пек çурт лартнă, çĕнĕ йышши çăмăл машина илнĕ. Ыр курса кăна пурăнмалла та Петĕрпе...

Ял çамрăкĕ хула хĕрне качча илчĕ. Часах йыш хушăнчĕ вĕсен. Кил хуçи юлташĕсемпе пĕрле вăхăт ирттерни, эрех ĕçсе таврăнни килĕшмерĕ çамрăк арăма. Кил таврашĕнче те пулăшмарĕ арçын мăшăрне. Лăпкăн та калаçса пăхрĕ, макăрса та кăтартрĕ хĕрарăм. Çук, Петĕр улшăнмарĕ. Лариса ывăлне çавăтрĕ те хулана куçса кайрĕ. Темле те ÿкĕтлесе пăхрĕ арçын, анчах арăмĕн кăмăлне çавăраймарĕ. «Унпа ĕмĕр ирттериччен мăшăрсăр пурăнни лайăхрах», – чунне уçрĕ хĕрарăм.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, юнашар ял хĕрĕпе çемье çавăрчĕ Петĕр. Унпа та пĕр кана лайăх пурăнчĕ. Эх, эрехпе туслашни ура хурать мар-и? Ÿсĕр упăшка тыткаларăшĕ тарăхтарсах çитерчĕ Наташăна. Киле таврăнсан выртса çывăрасчĕ те – çук вĕт. Чышкă пысăкăш какай çиес килет унăн. Çав вăхăтрах сăра кирлĕ ăна. Кайран тата пуçлать кăкăр çапма: килти кашни япала унăн имĕш. Унăн шухăшĕпе, ямăттине пула пурте иртĕхнĕ. Наташăн та чăтăмĕ пĕтрĕ. Каç еннелле упăшки килĕнчен тухса кайрĕ вăл. Çирĕп кăмăллăскер каялла таврăнмарĕ. «Лайăх упăшкаран арăм уйрăлмасть. Çакна мĕншĕн малтанах ăнланмансшĕ?» – ассăн сывлать Наташа.

Халĕ Петĕр вылянчăк кăмăллă хĕрсене киле кĕрткелет. Вĕсем те ун патĕнче вăрах тытăнса тăмаççĕ: килеççĕ те каяççĕ. Халь тин пурлăхпа та никама та илĕртеймĕ вăл. Çемье телейĕ – пĕр-пĕрне ăнланни, пулăшни, хавхалантарни. Ĕçчен те ăшă кăмăллă арăмсене хаклама пĕлмерĕ Петĕр. Урăлсан ÿкĕнет-ха та хăй. Анчах иртнине каялла тавăрма çук.

Петĕр ашшĕ-амăшĕ патĕнче выртса тăрать, апатланать. Хăйĕн çуртне те сайра хутра çеç кĕркелесе тухать вăл. Килĕнче те, чунĕнче те пушă унăн.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

## САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Хисеплĕ «Чăваш хĕрарăмĕ» редакци! Сирĕн хаçата кăмăлласа вулатăп. Юратнă кăларăм урлă хамăн телее тупас кăмăл пур. Пĕччен пурăнса ывăнтăм. Ялта пурăнма килĕшекен, 37–47 çулсенчи кăмăллă, шÿтe ăнланакан хĕрарăмпа паллашасчĕ. Ача пурри чăрмав мар. Эпĕ 47 çулта, авланман. Гороскопра – вăкăр. Эрех ĕçместĕп. Ыттине – телефонпа. Телефон редакцире.**

**Володя.**
Етĕрне районĕ.

## АХ, АНЧАХ...

# Упăшкана пула намăс куртăм

Туй кĕрлеттернĕренпе вунпилĕк çул çитрĕ ĕнтĕ. Ывăлпа хĕр ÿстеретпĕр. Пурăнатпăр майĕпен. Лайăх та япăх та теейместĕп – тĕрлĕрен пулать. Ара, килте чашăк-тирĕк шăкăртатмасăр пулмасть теççĕ вĕт.

Пачах ĕçмен çын мар Якур – уявпа пысăк сăлтав тупăнсан хирĕçлемест, анчах виçерен иртмест. Упăшкам пирки кахал та теместĕп. Аякри хулана ĕçлеме çÿрет. Киле таврăнсан та ахаль лармасть – колхоза ĕçе тухать. Вăл тăрăшнипех уйрăлса тухса икĕ хутлă çурт та хăпартрăмăр, хуралтă таврашĕсене те майлаштартăмăр. Ачасене мĕн çитермелле-ши тесе те нихăçан та шухăшламан. Хама та капăр кĕпе туянма чарман упăшкам.

Кун пек арçынпа савăнса çеç пурăнмалла тетĕр пулĕ-ха? Çапла. Саркаланса, пурнăç тутипе киленсе, кашни куншăн савăнса ирттермелле вăхăта. Лайăх упăшкана хурламалли те тупăнать çав – айккине чупать-çке.

Малтанах çакна хам та сисмерĕм-ха, каярах çеç чухлакан пултăм. Ара, мăшăрăм киле кая юлса таврăннине пин сăлтавпа çыхăнтарма пулсан та унран ют хĕрарăм шăрши кĕнине урăхла ăнлантарма çук-çке. Кун пек чухне вăл юнашар та выртмастчĕ.

Паллах, кĕвĕçрĕм. Хамăн арçынна юттипе камăн пайлас килтĕр? Тепĕр чухне çак туйăм пĕтĕм ăш-чикĕме тулатчĕ те кĕлеткем çурăласла тăвăрланатчĕ чунăмра. Ăна ăста каларса ямаллине те пĕлместĕм. Анчах кун пирки никама та каламарăм. Хăйне те. Пĕррехинче çеç чĕремре çав тери йывăрланса килнĕрен кун пирки сăмах пуçартăм.

– Кампа çÿретĕп тет-ха вара? – терĕ вăл эпĕ пĕлнине тĕшмĕртнĕн.

– Айккине чупнине сисетĕп-ха, мансăр пуçне тата кама савнине çеç чухламасăп, – терĕм ун чухне. – Эпĕ пĕлни тарама, ял халăхĕ мĕн калĕ? – асăрхаттартăм Якура.

Еркĕн пуррине кам йышăнĕ? Паллах, мăшăрăм та эпĕ пустуях пăшăрханнине ĕнентерме тăрăшрĕ. Мана туйăнать çеç имĕш.

Пилĕк çулта кĕвĕçÿ туйăмне çĕнтерме вĕрентĕм-ши? Е хăнăхрăм-ши? Якур тепĕр чухне айккине чупнине тарăхмасăр йышăнма вĕрентĕм. Кун пирки сăмах пуçарса упăшкапа хирĕçессĕм те килмест. Эпĕ вăрçăннипе ясар шухăшĕ чакмасть. Хама çеç вĕчĕрхентеретĕп. Паллах, куншăнах уйрăлса пысăк кил-çуртăмран эпĕ те тухса каймастăпах. Тепĕр тесен, кăлтăксăр арçын çук та. Хамăр ялтах акă упăшкипе асапланмасăр пурăнакан пĕр хĕрарăма та пĕлместĕп. Пăхма пурин мăшăрĕ те аван-ха – лайăххах тинкерсен пĕрин эрех пички ăшне путнă, теприн кахал, виççĕмĕшĕн алă çĕклет е кашни ĕçсе килмессерен килĕнчен хăвалать...

Якур айккине чупнине куç хупса ирттеретĕп тени те тĕрĕсех мар-ха. Тарăхнине пачах урăхла ирттеретĕп халĕ: пасар-лавккана йăрккатăп. Ачасем те, хам та яка çи-пуçа улăштарса çеç тăратпăр. Куншăн ялта сăмахлакан, ăмсанакан та сахал мар. Эпĕ çĕнĕрен çĕнĕ тумтир улăштарнăшăн ялти нумай хĕрарăм кураймасть мана. Кăна питĕ аван чухлатăп. Ара, упăшкам пĕр тĕрлĕ киленнĕ чухне манăн хама тепĕр тĕрлĕ парне тума юрамасть-и вара? Якур куншăн нимĕн те шарламасть. Эпĕ мĕншĕн апла хăтланнине те пĕлмест мар, чухлатех – унсăрăн ирĕк памĕччĕ.

Упăшкам айккине чупма тытăнни пилĕк çул çитрĕ ĕнтĕ. Тен, нумайрах та. Анчах кун пирки ялта калаçнине питех илтмен. «Упăшку чупкăн» текене тĕл пулман. «Ырă курса, иртĕхсе пурăнатăн» тени вара час-часах илтĕнет. Якур кампа çÿренине кут хыçĕнче те калаçмаççĕ пулĕ тетĕп. Пирĕн ялта «санăн апла та санăн капла» тесе сăмсаран пырса калама юратаççĕ, вăрттăн пăшăл пăтти пĕçернипе çырлахмаççĕ. Питĕ вăрттăн хăтланаççĕ курăнать еркĕнсем. Майне епле тупаççĕ-ши – пĕлместĕп. Тĕрĕссипе, хам та Якур кама ăшăтнине пĕлместĕп. Нумаях пулмасть çак вăрттăнлăха пĕтĕм ял пĕлчĕ. Ял кулли пулса тăтăм – çакă пăшăрхантарать.

Якур Çÿлтикасри Маруç патне чупнă иккен. Упăшки ĕçлеме кайсан тĕлпулма май тупнă хайхисем. Ял халăхĕ курман-шим тетĕр-и? Ку таранччен тытман çав. Иккĕшĕ машинăна ларса ял айккине çул тытнă. Хăçан вăрмана, хăçан хире тухнă-тăр çăмăл икĕ машина. Хальхинче хĕрĕнкĕленнĕ Якур асăрханулăх пирки манса Маруç машинине ял варринчех кĕрсе ларнă. Пĕри çакна асăрхама ĕлкĕрнĕ. Вăрăм сăмсаллăскер машина чарăнмасăрах çамрăк хурăнсен хушшине вĕçтернине те асăрханă. Çырла пухма тесе икĕ кустăрмаллă урхамахĕпе вĕсен хыççăн вĕçтернĕ. Якурпа Маруç шăкăл-шăкăл калаçнине çавă пĕлет те. Ĕçне тунине те курнă пулать вара.

Çапла пирĕн çинчен пĕр ял калаçать халĕ. Мĕн пулĕ ĕнтĕ малашне? Намăс-çке, ял умĕнче ăна ăста чикес? Эпĕ айăплă та мар-çке...

**ГАЛИНА.**



АСТĂВĂМ

# Çыравçă çĕрулмипе какай кукăлĕ юратнă





**Манăн алăра – Чăваш халăх çыравçин Александр Артемьевăн "Суйласа илнисен" пĕрремĕш кĕнеки. Вăл – автор килĕнче упраннăскер. Çакăнти "Алтăр çăлтăр", "Йывăр çулсем", "Симĕс ылтăн" повеçсенчи сăнарсене шкул вăхăтĕнчех тишкернĕ. Унăн хайлавĕсенчи кашни йĕрке ахаль те шыв юххи пекех вуланать. Çапах Александр Спиридонович кĕнекере те тӳрлетмелли тупнă. Тĕслĕхрен, "Алтăр çăлтăр" повеçе "Çăлтăр çумăрĕ" ятпа тепĕр хут пичетлесе кăларма палăртнă вăл. Çакăнтах предложенисем хушса çырнă, сăмахсене улăштарнă. Автор çĕнетсе хатĕрленĕ кĕнеке маншăн, унăн пултарулăхне сума сăваканшăн, тата та хаклăрах. Шăпах çакăнта çыравçăн хăвачĕ юлнăн туйăнать.**

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Александр Артемьев 1998 çулта çĕре кĕнĕ. Халĕ унăн тăватă тĕпренчĕкĕнчен пĕри – Александра – Шупашкарта пурăнать. Унăн иккĕмĕш арăмĕ Валентина Петровна çак кунсенче 80 çул тултарать. "Пирĕн йăх вăрăм ĕмĕрлĕ. 100 çултан иртнисем те пулнă", – кăмăллă сăмахлать манпа хĕрарăм. Шăпах ăна мăшăрĕ çинчен каласа кăтартма ыйтрăм. Александр Спиридоновичпа Валентина Петровна 36 çул пĕрле пурăннă.

Эпĕ çитнĕ чухне çаранта хăй пуçтарнă çĕр çырлине тасататчĕ вăл. Ăна сахăрпа пăтратса шăнтасшăн. Хваттерте – тирпейлĕ, хăтлă. Темиçе çул каялла çакăнта куçса килнĕ хыççăн йăлтах юсаса çĕнетнĕ хĕрарăм. Килĕнче ытлашши япала та çук. Александр Артемьевăн кĕнекисене библиотекăсене парнеленĕ вăл. Ытларахăшне çыравçă çуралнă тăрăха – Элĕк районĕнчи Тури Вылăна – леçнĕ. "Манăн юбилей вăхăтĕнчи асаилӳ каçĕсене те апат-çимĕç, кашăк илсе кай", – çут тĕнчерен уйрăличчен каласа хăварнă мăшăрне Александр Спиридонович.

Шăпа иккĕшне 1949 çултах паллаштарнă. Ун чухне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски клубне çыравçăсемпе сăвăçсене чĕннĕ. Александр Артемьевпа Петĕр Хусанкая 8-мĕш класс хĕрĕ Валентина урамрах кĕтсе илнĕ. Шкулта нимĕç чĕлхи вĕренекенскер пĕр вăтанмасăр нимĕçле сăвă каласа кăтартнă. Анчах иртсе пыракан машина сирпĕтсе хăварнине пула çи-пуçĕ вараланнă унăн. Çавăнпах шала кĕреймен хĕр. Эх, пăшăрханнă çакăншăн. Сăмах май, Валентина пуçламăш классенчех сăвăсем калав çырса пăхнă. Кайран та хăйĕн ăсталăхне хут çинче тĕрĕсленĕ. Хăй каланă тăрăх, "Алтай" повеçĕ журналта та пичетленнĕ.

Иккĕмĕш хутĕнче вĕсем Хусанти пристаньре тĕл пулнă. Александр Артемьевпа Петĕр Хусанкай Сĕнтĕрвăрри хĕрĕпе калаçас тесех пăрахут чарса тăнă. Валентина Тутарстана медсестрана вĕренме кайнă-мĕн. Анчах вилнĕ çынсене каснине курнă та – каялла çаврăнса килнĕ.

1962 çулта Маяковский ячĕллĕ библиотекăри конференцире тĕл пулса калаçнă. Арçын кашнинчех мĕн тăхăнни таранччченех астăвать хĕрарăм.

